1937 октябрĕр 8 ЕРНЕКУН
231 (4743)-мĕш №

Пĕр №-рĕ 10 пус — 19-мĕш ҫул тухать

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

Чăваш Коммунĕ

ПСК(б)П Чăваш Обкомĕпе Тĕпĕҫтăвкомĕн хаҫачĕ

Редакципе кантур адрĕсĕ: Город Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом Печати

ТЕЛЕФОНСЕМ: Редактăрăн 0—67; Ред. заместителĕн 0—88; Дежурнăйăн 6—23

Суйлав саккунне пропагандăлассине анлăн сарса йамала

Ҫĕршыв пирĕн — Аслă Социалисăмлă революци ҫирĕм ҫул тултарас умĕнхи, ССР Союзĕн Аслă Советне суйлас умĕнхи тапхăрта пурăнать. Пирĕн партин мĕн пур организацийĕ умĕнче ҫак тапхăрта тăракан тĕп задачисенчен пĕри вăл — Сталинла Конституципе ҫĕнĕ суйлав саккунне вĕренес йĕнпе агитацилĕ-массăллă ĕҫе туса пырасси пулать.

„Ҫак ĕҫе кашни предприятинче мĕн пур цехĕсенче, хватерсенче, хула кварталĕсенче, кашни ялта, кашни колхозра туса пыма питĕ нумай агитаторсемпе пропагандистсем кирлĕ пулаҫҫĕ. Сталинла Конституципе суйлав саккунне чĕрĕ сăмахпа кашни суйлаканă патне ҫитерес пулать.

Тĕрĕссипе илсен, ку ĕҫ тин ҫеҫ пуҫланчĕ-ха, вăл ĕҫ пайĕн партин хăйĕн организацисенчен ытти ĕҫне анлăн саралса каймарĕ-ха. Чăнах та, крайсемпе облаçсенче суйлав саккунне вĕренме нумай кружоксем тунă ĕнтĕ. Анчах ҫав кружоксенчен чылайĕшĕ йачĕшĕн кăна тытăнса тăраççĕ, сăмахран, Варварск районĕнче (вăл района Николайĕвск облаçĕнче суйлавсене хатĕрленес йĕнĕпе малта пыракансенчен пĕри тесе шутлаççĕ). Пайан епĕр ун ҫинчен пĕлтерни — нумай облаçсемпе районсенчи парторганизацисемшĕн вăйлă сигнал пулса тăрать.

Суйлавсем умĕнхи ăнлантарулă ĕç кашни коммунисăн, партири тата партипе мар кашни боЉшевикăн тĕп ĕçĕ. Парти комитечĕ ҫак ĕçшĕн чăнласах кĕрешнĕ ҫĕрте кадрăвăй рабочисем, колхозниксем, учителсем, служăщисем хушшин чен ҫалама ҫук паха ҫĕнĕ агитатăрсем тупăнаççĕ. Анчах ҫĕнĕрен пиншер агитатăрсем тупса палăртасси тата вĕсене хатĕрлесси хаЉхи вăхăтра начар пырать. Ҫак ĕçе вунă хут ӳстермеле, кашни агитатăр пирĕн тăван ҫĕршывăн ĕлĕкхипе хаЉхи пурнăçĕнчи чĕрĕ те ӳçăмлă материалĕсемпе усă курса Сталинла Конституципе суйлав саккунне ăнлантарса пама пĕлтĕр.

Совет Сойузĕ хаЉхи вăхăтра историлĕ ҫĕнтерӳсене пĕтĕçтерсе тухать. Пирти пек, социалисăм ҫĕршывĕнчи пек, ĕçсыннисем массисем умĕнче сарлака, ҫутă ҫул уçăлса выртни урăх мĕнле ҫĕршывра пур? Капиталисăмлă ҫĕршывсенчи рабочисемпе хресченсен пурнăçĕ нушалăхла, чухăнлăхпа, ыранхи кун тата йăвăртарах пулассинчен шикленнипе тулса ларнă. Унта ҫын чура пулса ҫуралать, чухăнлăхра вилет, тата, вилнĕ чух та вăл — унăн ҫемйине те, ачисене те ҫавăн пекех пулассине пĕлет.

Ҫак йывăр, пăхсан малашлăхсăр асаплă пурнăçа Социалисăмлă Аслă револЉуци пирĕн ҫĕршывра ĕççыннисен пурнăçĕнчен ĕмĕрлĕхех пĕтерчĕ. Пирĕн ҫамрăк ăру улпут, фабрикант, купец кам пулни ҫинчен, жандарм, пристав кам пулни ҫинчен илтнипе ҫеç пĕлет. Питĕ инçе йулнă пек туйăнать ҫак пурнăç, анчах чиккĕн леш йенчи ĕççыннисемшĕн вăл пайан та чăн пурнăç. Пирĕн аслă ҫĕршыври кашни ҫамрăк арçын ача, кашни хĕрупраç умĕнче, ачасемпе ашшĕсем умĕнче телейлĕ те ҫутă малашлăх сарăлса выртать. Ваттисем ҫамрăкланаççĕ, телейлĕ, савăнăçлă пурнăç ваЉЉи ҫĕнелеççĕ. Ҫамрăксем ваЉЉи пур ҫулсем те уçă, пур майсем те пур. Ыранхи кун пĕтĕмпех хамăрăн — ҫакă вăл совет ҫĕршывĕнчи ĕççыннисем кĕрешсе илнĕ пысăк ҫĕнтерӳ, Сталинла Конституци ҫакна гаранти парать.

„Сталинла Конституци ҫинчен ăнлантарса парас ĕçе иртнĕ кунçулсенчен уйрăмăн илсе тума пулать-и вара, Совет Сойузĕнчи халăхсене социалисăм панă ҫĕнтерӳсене манса суйлава хатĕрленме пулать-и вара? Пирĕн ҫĕршыври рабочи класпа хресченсем тĕпрен улшăнчĕç. Ленинла-сталинла наци политикĕ патша самани вăхăтĕнче „халăхсен тĕрми" пулнă ҫĕршывран националЉнăçсен туслă, тăванлă ҫемйи туса хучĕ. Ĕлĕкхи мĕскĕн, ҫурма аласталăхлă хăрăк-хăрăк хапрăк-савăт пеккисем вырăнне сталинла пйатилеткăсен ачисем — социалисăмла хапрăк-савăт гиганчĕсем капланса ларçĕ. Ансăр, хăрăк анасем вырăнче халĕ пăхса куç ҫавăрса илейми колхоз хирĕсем сарăлса выртаççĕ. Хĕрарăмсене ирĕке кăларни, ҫутта кăларас ĕç пысăккăн ӳсни, халăхсем хушшинчен талантсем тухса пыни, телейлĕ, савăнăçлă пурнăç — ҫаксем вĕсем пурте пайанхи пурнăç, хамăр куçпа курса тăракан, кашни кун, кашни сехетре сисĕнекен пуйан пурнăç.

Ҫак пысăк ҫĕнтерӳсем патĕнчен агитатăр ăçтан пăрăнса иртме пултартăр-ха? Акă мĕншĕн ĕнтĕ пирĕн ҫĕнтерӳсем ҫинчен каласа паракан лайăх агитатăрсем ватă рабочисемпе колхозниксем пулмала. Вĕсем вĕт иртнĕ ылханлă, асаплă пурнăçăн пĕтĕм йăвăрлăхне хăйсен ҫурăмĕ ҫинче тӳссе ирттернĕ. Пухусенче, кружоксенче вĕсем пирĕн ҫамрăксене капиталисăм самани вăхăтĕнче ĕççыннисем мĕн пек хĕрушă та тискер пурнăç кĕтсе тăни ҫинчен каласа параççĕ. Ҫак пурнăç ҫинчен ҫырнă ĕнтĕ халăхăн аслă поэчĕ, халăхшăн ĕçлекен Некрасов хăйĕн „Кому на Руси жить хорошо" текен поэминче:

И жизнь его не ратная,
И смерть ему не писана в бою, — а богатырь!
Цепями руки кручены, железом ноги кованы,
Спина... леса дремучие прошли по ней — сломалися...

Вĕсем иртнĕ пурнăç ҫинчен каласа пани — ҫамрăксене киввĕ тĕнче пирки татăкрахтарать, курайми тăвать, хăйсен телейлĕ ҫĕршывĕшĕн мĕн кăмăллă пулма хавхалантарать, совет халăхĕн ачисем хушшинче патриотизма вăйлатать. Пирĕн ачасем хăйсен ашшĕсем курнă асапа курман, вĕсем ăна ĕмĕрте те курас ҫук.

Совет гражданĕсене суйлава хатĕрлесси — вăл чи малтан политикăла хатĕрлесси пулать. Суйлав урни патне пыракан кашни совет гражданинĕн хăйĕн прависене тата обйазаннăçĕсене пĕлмелле, политикăлă лару-тăрува, правителствăпа партин пĕтĕм политикине — шалти тата тулти политикăна — уççăн ăнланса кĕмелле. ХаЉ ĕнтĕ халăхăн хаЉччен вĕсем хушшинче агитацилĕ-массăлă ĕç сахал пулнă йе пĕрттĕ пекех пулман сийĕсем политикăлă пурнăçа хутшăнма пуçлаççĕ. А вĕсем политикă тĕлĕшпе ыйтнисем висме ҫук ӳснĕ. Вĕсем пирĕн ҫĕршывра тата урăхçĕршывсенче пулса пыракан ĕçсем ҫинчен пĕлесшĕн, вĕсем хăйсен ыйтăвĕсем ҫине тулкăлă та уççăн ответсем илесшĕн. Агитатăрăн обйазаннăçĕ — вĕсене ҫав ответа парасси.

Хăйĕн задачине хĕсĕк ăнланакан, аудиторине пит интереслентерекен политикăлă ыйтусем ҫине ответ парасшăн мар йе ответ пама пултарайман агитатăр итлекенсем умĕнче ҫав тери нушăскер тата авторитетсăрскер пулса тăрать. Акубинскри пĕр пухура хĕрарăмсем агитатăра, Цыганова, Испанири тата Китайри вăрçă ҫинчен каласа пама ыйтнă. Вăл ҫапла ответленĕ: „Хула комитечĕ мана ку ĕç тума полномочи паман. Унта кайса килĕр, Хула комитечĕ ирĕк парсан, епĕ каласа парăп", тенĕ. Агитатăр хăйĕн задачисене ăнланманнине, политикă тĕлĕшĕнчен пит пысăк пахалăхлă ĕç ҫине кĕсĕк — деЉагăлă пăхнине кăтартакан тĕлĕнтермелле урăх пример кирлĕ-и вара?

Ҫакна пĕр минутлăха та манма йурамаст — епĕр агитацилĕ-массăлă ĕçе йапăх туса пынă ҫĕрте, клас тăшманĕ хăйĕн тăшманла ĕçĕсене тăвать, вăл халăхăн кайа йулнă сийĕсене хăй майлă ҫавăрма пикенет. Клас тăшманĕн ĕçĕсене пĕтерсе хурас пулать, унăн ĕçĕсене хирĕç хамăрăн коммунисла сăмах — саспа калани тата пичетлесе кăларни пулмала.

Ҫав вăхăтрах, пирĕн хаçатсем, нумайĕшĕ, тĕрĕссипе илсен суйлав саккунĕ ҫинчен пропагандă тума тытăнман та, вĕсем суйлав кампанине тĕплĕн хатĕрленме тытăнман. Кун йышшисем чи малтан „Труд" (Пĕтĕм Сойузри Профсойузсен Тĕп Совечĕн органĕ) пек хаçатсем пулаççĕ, вăл ҫентябĕр уйăхĕнче профсойузсене ССР Сойузĕн Аслă Совечĕн суйлавне хатĕрлесси ҫинчен нимĕн те пекех пичетлесе кăларман. Ҫавă тата облаççемпе районсенчи хаçатсене нумайĕшне, уйрăмах „Волжская Коммуна" (Куйбышĕв облаçĕ) тата „Коммунист" (Саратăв облаçĕ) хаçатсене пырса тивет, вĕсем хăйсен чи пĕрремĕш обйазаннăçне — суйлавçăсен мĕлйунлă массисене ССР Сойузĕн Аслă Совечĕн суйлавне хатĕрлессине манса кайнă.

Халăхăн пур сийĕсем хушшинче те агитацилĕ-массăлă ăнлантару ĕçне туса пымала; ҫакна тума ĕçе ăста пĕлекен агитатăрсемпе пропагандиссен ҫарне хатĕрлемеле; вĕсене ĕççыннисем хушшинче нумай тупса малала кăлармала, вĕрентсе, инструкцилесе, ĕçре пулăшса пымала; суйлавçăсен политикăла тавракурăмне хăпартмала, вĕсем хамăрăн хаЉхи ытарайми ырă социалисăмла пурнăçшăн тата пуласлăхшăн, ҫав ҫĕнтерӳсене тунă коммунисла партишĕн сасăланине пĕлсе тăччăр, — ҫакăн пек задачăсем тăраççĕ пирĕн умра.

Вара суйлавçăсем аслă событи патне — ССР Сойузĕн Аслă Совечĕн суйлавне хатĕр пулса пырса ҫитĕç, унта тивĕçлĕ, Ленин — Сталин партин ĕçĕшĕн пĕтĕм чĕререн тăракан, хамăрăн социалисăмла аслă Тăван Ҫĕршыври ĕççыннисен интересĕсене хӳтлеме пĕлекен представителсене суйласа йарĕç.

(„Правда" умстатйи, 1937 ҫул, ҫентабĕрĕн 7-мĕшĕ).

Агрессăрсене отпор парас тата миршĕн кĕрешес паллăпа

Ҫентабĕрĕн 13 мĕшĕнче ĕçе тытăннă Лигă наци пленумĕн ĕçĕсем вĕçне сывхараççĕ. Пленум ĕçĕсем пирки татăклă итогсем тума иртерех-ха, анчах та Пленум комиççисем тата Пленум хăй те пысăк, кирлĕ ыйтусем тăрăх чылай решенисем йышăннă хыççăн, пĕтĕм Пленум ĕçне кăтартакан пĕр паллă пирки халех калама пулать. Агрессăрсене пĕрмайах уступкă парассине пĕтерсе лартма, Лигă авторитетне хăпартма пултаракан Лигă членĕсем хушшинче иккеленсе тăрасси ҫаплах пысăк пулсан та, ҫавăн пекех тата агрессăрсен Лигăри тусĕсем активлă ĕçлеççĕ пулсан та (чăнах та, вĕсем Лигăра сахал йышлă ĕнтĕ) — Лигă нацин хаЉхи Пленумĕ агрессăрсен вăрçă суллĕ ҫинче пуçласа сисĕнмелерех чăрмав пулса тăнине кăтартрĕ. Ҫак йенчен илсен, сăмах та ҫук, хаЉхи пленумăн ĕçĕсем агресçарсене отпор парас тата миршăн кĕрешес паллăпа пулса иртеççĕ.

Чăнах та, Лигă нацине чăннипех ҫĕнĕрен „чĕрĕлесси" патне ҫитме инçе-ха (Женевăри хăшпĕр ентузиассем ҫакăн пек шутлама хатĕр те ĕнтĕ). Ҫакăн пек „чĕрĕлесси" ҫуккинĕ ҫак Пленум: Испанине Лигă Советне суйламала мар туса йышăнни питĕ лайăх кăтартса парать. Ҫавăн пекех тата Испани ыйтăвĕ пирки Совет Сойузĕ, Англи, Франци делегацийĕсем ытти делегатцисемпе пĕрле сĕннĕ резоЉуцине йышăнманни пысăк шухăша йаракан йапала. Ҫак резоЉуцине йышăнас марри пурĕ те икĕ патшалăх (Португалипе Албани) интервентсем майлă уççăн тăрса ăна хирĕç сасăланă пирки кăна пулнă. 14 делегаци (вĕсем хушшинче нумайĕшĕ интервентсен сойузникĕсемпе тусĕсем) сасăламасăр тăнă. Апла пулсан та, ҫак резоЉуцине улттăмĕш (политиклă) комиççи йышăнни тата вăл ăна ҫирĕплетме Пленума тăратни — агрессăра хирĕç кĕрешекенсем пысăк ҫĕнтерӳ туни ҫинчен калакан факт. Ҫавăн пекех тата Испани ыйтăвĕ пирки тăратнă резоЉуцине сасăланă чухне интервентсем майлă пулнă делегацисем хăйсене хăйсемех тытăнмала пулни интервентсене хирĕçле ĕç пулать.

Агрессăрсене отпор пани ҫинчен калакан фактсем мĕнлескерсем-ха? Економикă комитечĕн ĕçĕсенче, ҫавăн пекех тата чĕртавар ыйтăвĕсене пăхса тухакан комитет ĕçĕсенче (ку комитетсем Лигă наци пленумĕ пухăначчен пулнă) совет представителĕ активлăн тухса калани, — хăшпĕр делегацисем, уйрăмăн илсен — Англи делегацийĕ вăл каланисем майла хыттăн тăни пулман пулсан та, — фашисла агрессăрсене хирĕç пулни хыттăнах палăрнă. Економикă комитечĕ вăрçă политикине пăрахăç тăвасси ҫинчен тата патшалăхсем хушшинче економикăлă ҫыхăнусем тытма кирлĕ тĕп услови — тĕнчери обйазателствăсене ҫирĕппĕн тытса пырасси пулать тесе йышăнни, ҫавăн пекех тата чĕртавар ыйтăвĕсене пăхса тухакан комитет фашисла агрессăрсене чĕртавар пама йурамаст тесе кăтартса панисене Лигă наци пленумĕ ырларĕ.

Фашисла пиратсем (тинĕс ҫинчи вăрă-хурахсем) Вăтаçĕр тинĕс ҫинче тискер ĕçсем тунине хирĕç протестлесе Совет правителствине йанă нотă тата ун хыççăн Нионри конференци йышăннă решенисем пленум ĕçĕнче чăннипех пысăк вырăн йышăннă. Ҫав нотă тата ҫав конференцин решенийĕсем, иртĕнсе кайнă пиратсемшĕн лайăх урок пулса тăнă. Вăрçăпа тапăнакансем тата вĕсен хутне кĕрекенсем Абиçсинине Лигă нацинчен кăларса йама — Итали ҫавна тăвас тенипе — малтанах план хатĕрленĕ пулнă. Анчах Нионри конференци хыççăнхи лару-тăрува пула ҫавна вĕсем пурнăçа кĕртеймен. Тата ҫавăн пек лару-тăрура „ҫирĕм сакăр членлă комитет" (Лига наци уставĕн принципĕсене пурнăçа кĕртмели майсене вĕренме уйăрнăскер) сӳтсе-йавакан пĕтĕм ыйтусем шутĕнчен Лигă членне пурне те кĕртес ыйтува мала кăларасси ҫинчен тата Лигă членĕ маррисенчен Лигă уставне мĕнле улшăнусем кĕртесси пирки халех ыйтасси ҫинчен сăмах та пулма пултарайман (Чили делегачĕ Едварис ҫавăн пек ыйтасшăн пулнă). Йулашкинчен тата „ҫирĕм виçĕ членлă комитет" (Йапони — Китай конфликтне пăхса тухма уйăрнăскер) йышăннă резоЉуци ҫинчен палăртса калас пулать, ку резоЉуцире йапонцăсем, хӳтлĕхсĕр хуласем ҫине тапăнса, Китайăн граждăн халăхнĕ тискерле пĕтернине хытă сивленĕ.

Ыйту тухса тăрать: ҫавăн пек ĕçсем, Женевăна пухăнакансемшĕн хăнăхман ĕçсем тунин сăлтавне ăçта шырамала-ха? Вăрçăпа тапăнакансене отпор парас йухăм ӳссе пынин тата миршĕн кĕрешесси вăйланса пынин пĕрремĕш тата пурте йышăнакан сăлтавĕ — ССР Сойузĕн хăвачĕ калама ҫук ӳсни, вăл тăтăшах тата ҫине тăрса мирлĕ политикă тытса пыни, ҫавăнпа совет дипломатийĕ пĕтĕм тĕнче умĕнче тухса каланин хăвачĕ пĕрмайах ӳссе пыни пулать. Пиратсем совет пăрахучĕсем ҫине тапăнни пирки асăрхаттарса Итали правителстви патне йанă нотă, Англипе Франци правителствисем патне Нионри конференцийе чĕннĕ май ответлесе йанă нотă, Литвинăв йулташ Нионри конференцире тухса калани, вăл Лигă наци пленумĕнче тухса калани тата совет делегацийĕ Лигă Пленумĕнче Испани тата Китай Лигăна йанă чĕнӳсемшĕн активлăн хута кĕни, — аслă социалисăмла державă мир хутне кĕрсе тата хăрушсăрлăха коллективлă хӳтлессишĕн тăрса ҫавăн пек уççăн та татăклăн тухса калани, Женевăна пухăннисем пурте йышăннă тăрăх, Пленум ĕçĕнче татăклăнах сисĕнтерсе тăнă.

Иккĕмĕш сăлтав — тĕнче вăрçи ҫĕнĕрен пуçланса кайас хăрушлăх ӳссе пынă май, пур ҫĕршывсенчи ĕççынни массисем тата пĕчĕк патшалăхсем чылайĕшĕ шикленни вăйланса пыни пулать. Ҫур ҫул кайала ҫав шиклен ним тума аптрани тата вăрçă пуçарма хатĕрленекенсемпе килĕшес килни йе „никам майлă та мар пуласси" патне илсе пынă пулсан, халĕ ĕнтĕ ку тĕлĕшпе, имшеррĕн пули те, хăшпĕр ҫаврăнусем пулнине курма пулать. Кун пек ҫаврăнува ҫакăнтан та курмала: Белги хăйне Лигă советне суйланипе килĕшнĕ, тата вăл, Белгин урăхçĕршыв министăрĕ хăй тухса калавинче ăна палăртнă, ҫавăнтан (Лигă советне суйланиччен) килекен обйазателствăсене пурне те йышăннă. А икĕ ҫул кайала Белги „никам майлă та мар" текен иккĕле позици тытни пирки пысăк йанрав пулнăччĕ. Ҫавăн пек позицире тăнине, пурте пĕлеççĕ, вăрçă пуçарасшăн ҫунакансем унчухне, ырланăччĕ. Пленумра Йугослави делегачĕ те кĕтмен ҫĕртех вăрçăпа тапăнакансен Женевăри тусĕсене хирĕç тухса каланă. Йугословинче пуçпулса тăракан ушкăнсем Германири фашисăм йенне туртăннине пурте пĕлеççĕ, ҫавăнпа унăн делегачĕ Пленумра ҫапла тухса калани пушшех кĕтмен ҫĕртен пулнă. Йулашкинчен тата Еквадор делегачĕ Пленумра хăйне мĕнле тыткалани те паллă пулса тăрать. Итали Абиçсинине хирĕç вăрçнă чухне, патшалăхсем Италине пӳлмелли ĕçсем тума килĕшнĕччĕ. Еквадор ҫавна никамран малтан пăснăччĕ. ХаЉхи пленумра Еквадор делегачĕ Испани хутне кĕрсе тухса каланă тата сасăланă, — Латин Америкинчи патшалăхсен предварителĕсем хушшинче ун пеккисем сахал пулнă.

Йулашкинчен, Женевăра палăракан хускалусен сăлтавне — Йевропăри ĕç пуласси вĕсенчен килекен буржуалă патшалăхсем — Англи тата Франци вăрçă пуçаракансем ҫине мĕнле пăхни, майпен тата асăрханулăн пулин те, улшăнса пынинче шырас пулать. Ҫав ҫĕршывсенчи пуçпулса тăракан ушкăнсем ҫакна ĕненсех пыраççĕ: вăрçă пуçаракансен ĕçĕсем ытлашала кĕрсе кайма пуçларĕç, пирĕн патшалăхсен интересĕсене те пырса тивме пултараççĕ, тесе шухăшлаççĕ вĕсем. Ҫавăнпа вĕсем вăрçă пуçаракансем ҫине мĕнле пăхни улшăнса пырать.

Ҫав ҫĕршывсенче — Англире тата Францире — массăсем хушшинче вăрçа хирĕç кăмăл ӳссе пыни те хăйне [illegible]татех, — агрессăрсем ҫине мĕнле пăхасси улшăнни ҫавăнтан та килет. Паллах ĕнтĕ, Англи тата Франци вăрçă пуçаракансем ҫине мĕнле пăхни улшăнасси пит вăрахăн пулса пырать, турткаланса тăнисем те, кайала чакнисем те, уйрăмах вăрçă пуçаракансене татăклă отпор парасси ҫинчен сăмах пынă чухне, нумай пулаççĕ. Анчах событисене ăнланни тата хăйсен активлăхне вăйлантарса пыракан агрессăрсем, пĕтĕм тĕнчери мире харушлăх кӳни ӳссе пыни — ҫаксем вăл патшалăхсене. — Лигă наци ăраскалĕ, ҫавăн пекех тата мир ăраскалĕ чи малтан вĕсенчен килет, — вăрçă пуçаракансене отпор парассине вăйлатас ҫул ҫине, мире хӳтлессине коллективлă организацилес ҫул ҫине тĕртеççĕ. Ҫакă пулать Лигă наци Пленумĕн тĕп пахалăхĕ.

Аслă социалисăмла револЉуци ҫирĕм ҫул тултарас умĕн

1917 ҫулхи октябĕрĕн 8 мĕшĕ (ҫентабĕрĕн 25-мĕшĕ)

Мускавра районри думăсен суйлавĕнче боЉшевиксем ҫĕнтернĕ.

Донбас промышленникĕсем, рабочисен требованисене хирĕç тăрса, пур предприйатисене те ĕçлеме чарăнтарма йышăннă.

Виççĕмĕш тата йулашки коалицилĕ правителствăна туса хунă.

Ҫав правителствă ҫинчен Сталин йулташ ҫапла ҫырнă:

„Совещчанипе ултавсем тунă тата правителствă скандаллă саланса кайнă хыççăн, Мускаври биржевиксемпе „каласнă" тата сер Бйукенен патне вăрттăн ҫӳренĕ хыççăн, хĕлехи двоецра кăмăллă курнăçусем пулнă тата соглашателсем сутăнчăклă ĕçсем йĕркеренех тунă хыççăн, — йулашкинчен „ҫĕнĕ" (пĕтĕмпех ҫĕнĕ!) правителствă пулса тăнă".

Ҫав правителствă ҫинчен Сталин йулташ тата ҫапла каланă: „Корнилăв тӳррĕмĕн, генералла простă пурнăçа кӳртесшĕн пулнине, „ҫĕнĕ" правителствă майпен тата йанрашусăр, „социалиссен" хăйсен аллипех пурнăçа кĕртме тăрăшĕ„. („Рабочий Путь", № 21, стр. 401).

Комсомолăн облаçри XIV-мĕш конференцийĕ хупăнчĕ

Октабĕрĕн 5-мĕшĕнчи каçхи ларура тата октабĕрĕн 6-мĕшĕнче кунĕпех конференци ПСҪЛКС Чăваш Обком пленумĕн членĕсемпе кандидачĕсене, Обкомăн ревизи комиççи членĕсене вăрттăн сасăласа суйлама сĕннĕ кандидатурăсене пăхса тухрĕ. Конференци кашни ҫыннăн биографине ыйтса пĕлчĕ, политикă тĕлĕшĕнчен мĕн таран шанчăклă пулнине тĕрĕслерĕ.

Хашпĕр делегатсем, ĕç ҫине ответлăха туймасăр пăхнă пирки, комсомолăн облаçри йертсе пыракан органĕсене йурăхсăр ҫынсене суйлама сĕннĕ. Акă, Илларионăв. ХаЉхи вăхăтра вăл Ҫĕмĕрлере ĕçлет. Ăна, пуп тавраш пулнăскере, конференци кандитатурăсен спискинчен, конференцинчен тата комсомолтан кăларчĕ.

Мăн Чурашри (Йетĕрне р.) вăтам шкул директăрĕ Петров, Шупашкарти учителсен институтĕнче вĕреннĕ вăхăтра, институтри троцкиссемпе, буржуалă националиссемпе тата ытти тăшмансемпе кĕрешессинчен пăрăнса, хăйне „комсомолĕç мар" тесе пурăннă. Институтран тухса Йетĕрне районне кайсан, вăл, комсомол организацийĕнчен ҫавнашкал ҫултаЉăка йахăн йутшăнса пурăннăскер, „ахаЉ тăвăл иртрĕ" тесе пулас, комсомола ҫĕнĕрен кĕме шут тытать.

Халăх тăшманĕсемпе кĕрешессинчен пăрăнса, икĕпитленсе пурăннăшăн конференци Петровран делегат мандатне туртса илчĕ тата комсомолтан кăларчĕ.

Тăшмансемпе ҫыхăну тытнăшăн, вĕсене ĕçлеме май панăшăн Шăмăршă райкомĕн секретарĕ пулса ĕçленĕ Чудакова конференцинчен кăларчĕç тата секретар ĕçĕнчен хăтармала турĕç.

Кандидатурăсене пĕтĕмпе пăхса тухнă хыççăн, октабĕрĕн 6-мĕш каçхине, конференци вăрттăн (хуппăн) сасăласа ПСҪЛКС Чăваш Обком пленумĕн членĕсемпе кандитачĕсене тата ревизи комиççи членĕсене суйларĕ.

Октабĕрĕн 7-мĕшĕнче шутлав комиççи председателĕ Соколов йулташ комсомол Обкомĕн членĕсемпе кандитачĕсене тата ревизи комиççи членĕсене вăрттăн сасăласа суйланин резуЉтачĕсене каласа пачĕ. Конференци шутлав комиççи протоколне ҫирĕплетрĕ.

Конференцире ПСК(б)П Обкомĕн секретарĕ С. П. Петров йулташ пысăк сăмах тухса каларĕ. Вăл комсомол чăваш организацийĕ умĕнче тăракан татăклă задачăсене кăтартрĕ. Конференци ун сăмахне алă ҫупса йышăнчĕ. Кун хыççăн конференци комсомол Обкомĕн отчĕчĕ тăрăх резоЉуци йышăнчĕ.

Конференци тăвăллăн алă ҫупса пĕтĕм тĕнчери пролетариатăн аслă ҫулпуçĕ, йуратнă Сталин йулташ патне ҫыру йама йышăнчĕ.

ПСК(б)П Обкомĕн секретарĕ Г. Иванов йулташ йулашки сăмах каланă хыççăн конференци хупăнчĕ.

Комсомолăн облаçри XIV-мĕш конференцийĕ суйласа хăварнă ПСҪЛКС Чăваш Обкомĕн составĕ

ПСҪЛКС Чăваш Обком пленумĕн членĕсем:

1. ШЉабина Е. П.—Елĕк р.
2. Данилăв В. Д.—Тутаркас р.
3. Семенăв М. С.—Шупашкар хули.
4. Иванов Л. А.—Канаш.
5. Николайĕв М.—Пăрачкав р.
6. Петров С. П.—ПСК(б)П Обкомĕн секретарĕ.
7. Павлова В. П.—Шупашкар р.
8. Иванов Г. И.—ПСК(б)П Обкомĕн секретарĕ.
9. Никифăрăв И. Н.—Йетĕрне р.
10. Кузмина — Ҫĕрпӳ р.
11. Андрейĕв Г. В.—Тутаркас р.
12. Баранăв А. А.—Канаш р.
13. Клинова Е. В.—Канаш р.
14. Алексейĕвă Е. А.—Ҫĕрпӳ р.
15. Клементйĕвă Т.—Шупашкар хули.
16. Ваçилйĕв — Шăмăршă райкомолĕ.
17. Максимова П. М.—Вăрмар МТС.
18. Никитин А. К.—Канаш хули.
19. Прохăрăв И. — ПСҪЛКС Обкомĕ.
20. Степанова В.—Шăхасан р.
21. Филимонăв Т. В.—Елĕк р.
22. Свешникăв В. И.—ПСК(б)П Обкомĕ.
23. Николайĕв А. И.—Шупашкар р.
24. Арзамасцĕв К. — Кувакинă р.
25. Андрейĕв А. А.—Ҫĕмĕрле р.
26. Харитонăва Е. Х.—Вăрнар р.
27. Краснов А. М.—Йетĕрне р.
28. Умникова А.—Улатăр р.
29. Азисăв Т. А.—Шăнкăртам р.
30. Моисейĕва А. М.—Вăрнар р.
31. Степанова И. С.—Патăрйел р.
32. Йегорăва Т.—Шупашкар хули.
33. ПитеЉникăв И. П.—Тутаркас р.
34. Скачкова П. М.—Шупашкар хули.
35. Брейкин А. П.—Улатăр р.
36. Абакумова М. А.—Йетĕрне р.
37. Толстова М. К.—Ишлей р.
38. Артемйĕва А. А.—Шупашкар хули.
39. Чихина И. И.—Сĕнтĕрвăрри.
40. Бондăрĕва И. С.—Сĕнтĕрвăрри
41. Машкова А.—Куславкка комбиначĕ.
42. Маркăв Ф. С.—Йелчĕк р.
43. Асафйĕв И. А.—Шупашкар хули.
44. Йефимăва М. И.—Хĕрлĕ Чутай р.
45. Андрейĕвă П. А.—Йетĕрне р.

ПСҪЛКС Чăваш Обком пленумĕн членĕсен кандидачĕсем:

1. Шарыпăв — Шăнкăртам р.
2. Константинăв—Шупашкар хули.
3. Фомин П. И.—Патăрйел р.
4. Грачов П. Н.—Ҫĕмĕрле комбиначĕ.
5. Илйин И. И.—Шăхасан р.
6. Григорйĕв А.—Йĕпреç.
7. Ваçилйĕв Н.—Йĕпреç р.
8. Соколова И.—Патăрйел р.
9. Гуçков В. П.—Ишлей р.
10. Никанорова — Канаш р.
11. Смирнов А. — Турхан р.
12. МозоЉкин — Турхан р.
13. Кузмин С. — Шупашкар хули.

ПСҪЛКС Обкомĕн ревизи комиççи членĕсем:

1. Алексейĕв П. И.—Шупашкар
2. ВишЉов В. П.—Патăрйел р.
3. Николайĕв В. Н.—Ишлей р.
4. Павлăв К. П.—Вăрмар р.
5. Лукийанăв М. — Вăрнар р.

ПСҪЛКС Обкомĕн пĕрремĕш пленумĕ

Октабĕрĕн 7-мĕшĕнче ПСҪЛКС Чăваш Обкомĕн организацилĕ пленумĕ пулса иртрĕ. Вăрттăн сасăласа, пленум Обком бӳровне тата Обком секретарĕсене суйларĕ. Обком бӳровĕн членне ҫак йулташсем суйланчĕç: **И. Никифăрăв, К. Арзамасцĕв, М. Семенăв, А. Моисейĕвă, И. Прохорăв, А. Баранăв, И. ПитеЉникăв, Г. Андрейĕв** тата **Ваçилйĕв**. Кандидатсем: **Л. Иванов** тата **П. Макăв**.

Обкомăн пĕрремĕш секретарĕ пулма **Никифăрăв** йулташа, иккĕмĕш секретарне **Арзамасцĕв** йулташа суйларĕç.

Пионерсен пайĕн пуçлăхĕ **Моисейĕвă** йулташа, вĕренекен ҫамрăксен пайĕн пуçлăхне **Прохăрăв** йулташа, рабочи ҫамрăксен пайĕн пуçлăхне **Клементйĕвă** йулташа, хресчен ҫамрăкĕсен пайĕн пуçлăхне **ПитеЉникăв** йулташа ҫирĕплетрĕç.

„Ҫамрăк колхозник" хаçатăн редактăрне **Андрейĕв** — йулташа, „Пионер сасси" хаçатăн редактăрне **Ваçилйĕв** йулташа ҫирĕплетрĕ.

ССР Сойузĕн Аслă Советне суйлас умĕн

Шăхасансем суйлава начар хатĕрленеççĕ

Суйлава хатĕрленес майпа Шăхасан районĕнче, октябрĕн 2-мĕшĕнче суйлав участокĕсем, вĕсене валли суртсем, суйлав комиссийĕ валли çынсем палăртса хунă. Суйлавçăсен списокĕсене те туса тытăннă, анчах 8 йалсоветра ку списокла та туса пĕтермен-ха.

Районра суйлав çĕнĕ саккунне вĕрентес тĕлĕшпе те чылайăх ĕçсем тунă. Районри парти организаци пухăвĕнче, райĕçтăвком пленумĕнче, пропагандиссене агитаторсен семинарĕнче, политкружоксенче сӳтсе йавнă. Йалсоветсенче колхозниксен аслă пухăвĕсенче, бригада пухăвĕсенче докладсем, калаçусем туса ирттернĕ. Учительсем те хăйсем хушшинче кружоксем организацилесе çĕнĕ суйлав саккунне вĕренеççĕ, халĕ вĕсем, шкул ачисем хушшинче кружоксем организацилесе, шкул ачисене суйлав саккунĕпе паллаштараççĕ.

Парти райкомĕ панă сведенисем тăрăх, октябрĕн 2-мĕшне, районра суйлав саккунне вĕренес тĕлĕшпе 256 кружок ĕçлет, вăл кружоксенче 16 пин çын çӳрет. Анчах райĕçтăвком кăтартнă тăрăх çак кружоксенче 14 пин çын çеç вĕренет. Кунтах епĕр райкомпа райĕçтăвкомăн сведенийĕсем хушшинче килĕшӳ çуккине куратпăр.

14—16 пин çын кружоксенче çĕнĕ суйлав саккунне вĕренеççĕ тенине ĕненмесе те çук. Мĕншĕн тесен, чылай йалсоветсенче, колхозсенче, бригадăсенче кружоксене миçе çын çӳренине пĕлмеççĕ. Кăна Ентрийал йалсоветĕнчи ĕçсем лайăх кăтартаççĕ. Ентрийал йалсоветĕнче 17—18 кружок шутланса тăрат, анчах çак кружоксенче миçе çын вĕренине йалсовет председателĕ Семйонăвă йулташ пĕлмест. Çак йалсоветĕнчи, хăшпĕр колхозсенче кружока 50—60 çын çӳрессисем пулнă пулсан, 17—18 çын анчах çӳреççĕ. Акă „Комсомол" колхозра 60 çын вырăнне 17—18 çын анчах çӳреççĕ. Пуринчен ытла кружока хĕрарăмсем колхозницăсем начар çӳреççĕ, кашни занятие 5—6 çынтан ытла пымаççĕ те.

Ентрийал йалсоветĕнчи пример, ПСК(б)П райкомĕпе райĕçтăвком çĕнĕ суйлав саккунне вĕренес ĕçне ситĕнлĕх йертсе пымани çинчен калаçа пырат. Кун пек ситменлĕхсем тем чухлех. ПСК(б)П райкомĕ агитаторсемпе пропагандиссене, вĕсен кашни кунхи ĕçне ситĕнлĕ таран пулăшу парса пымасть, çавăнпа та пропагандиссемпе агитаторсем чылайăшĕ ыйтусене тĕрĕс ответ параймаççĕ.

Районри хаçат та колхозниксен ыйтăвĕсене пичĕт урлă ответлес ĕçе халиччен те майласа йаман. Çавăнпа та колхозсенче колхозниксем тата партийцă-комсомолĕссем чылай ыйтусене тĕрĕс ăнланман, ыйту парсан, тĕрĕс ответ параймаççĕ.

Ентрийалĕнчех Семйонăвăпа Широкăвă йулташсем, пирĕн Чăваш республикинчи суйлавçăсем миçе бюллетене саслăсене пĕлмеççĕ. Çав йалсоветрах, комсорг Павлăв йулташ çав ыйтăва çапла ответлет: „Пĕр бюллетене Сойуз Советне суйлассине, тепри—Национальносен Советне суйлассине, виççĕмĕшĕ — Чăваш республикинчи Аслă Совета суйлассине", —тет. Кун пек примерсем татах та нумай.

Çавăнпа пĕрлех пайанхи куна районта йалсоветсене, колхозсене радио кĕртес, радиоаппаратсем илсе лартас ĕç те начар пырат. Чылай колхозсенче йалсоветсенче радиоприемниксем çук, хăшпĕр çĕртре нурриссем те питанисем çук пирки ĕçлемеççĕ. Нижне-Девлизеровски йалсоветĕнче 2 приемник питани çук пирки ĕçлемест. Ухман йалсоветĕнче те 3 колхозра 2 колхозĕнче радио çук. Çавăн пекех ытти йалсоветсенче те.

Чылай колхозсенче тата йалсоветĕсенче стена хаçачĕсем йĕркеллĕ тухса пымаççĕ. Суйлава хатĕрленес ĕçре стена хаçачĕсем пысăк вырăн йышăнса тăма çинчен пурте калама пултараççĕ пулин те, анчах вĕсен ĕçне майлас, йĕркелес тĕлĕшпе нимĕн те тумаççĕ. Чылай колхозсенче стена хаçачĕсем хирти ĕçе пуçтарнăранпа та тухмаççĕ. Ентрийал йалсоветĕнчи „Комсомол" колхоза уйăх ытла ĕнтĕ стена хаçачĕ тухма пăрахнă, çавăн пекех ытти колхозсенче те.

Районри хаçат ситĕнлĕх йертсе пыманнипе те ĕнтĕ, колхозри стена хаçачĕсем çавăн пек начар ĕçлеççĕ.

Суйлава хатĕрленнĕ май, çĕнĕ суйлав саккунĕ çинчен çеç агитацилени, ăна çеç вĕрени пите те ситĕнлĕхсĕр. Çавăнпа пĕрлех тĕп йĕркийĕн çийĕнĕ çинчен, Совет çĕршывĕн шалти тулти хăрушлăхĕсем çинчен агитацилес ĕç пысăк вырăн йышăнмала. Ку ĕç Шăхасан районĕнче чылай начар майласа пынă.

Шăхасан районĕнчи партипе совет организацисен çак ситменлĕхсене халех пĕтерме тăрăшмалла, суйлава чăн-чăнах та большевикла хатĕрленсе, большевиклах ирттерсе йамала. Клас тăшманĕсене ашкăнма, ирĕк ĕçсем тума ирĕк памала мар. Агитаци ĕçне вăйлатса, колхозниксен клас сисĕмлĕхне ӳстерĕмелле, клас тăшманĕсен йăвисене тĕпĕпех тустарса, вĕсене тĕп-йĕрĕпех çапса салатса пĕтерсе, суйлава большевикла интерессишĕн кĕрешмелле. Суйлавра чăн-чăнах та партипе совет влаçне, совет çĕршывне йуратакан çынсене, вĕсемшĕн хăйĕн пурнăçне те хĕрхенмен çынсене суйлама хатĕрленмелле.

И. Г. Кирйушкин.

Массă суйлав Положени кĕнекине ыйтат

Колхозниксен йышлă масси „ССР Сойузĕн Аслă Советне суйламалли Положени" кĕнекине ыйтат. Унпа пĕрлех суйлав Положенийĕ çинчен калакан ытти литературăсене йалсенче тупса илме питĕ йăвăр. Йалта кăна мар, ку кĕнекене Шупашкарти хаçат киоскĕсенче такçанах сутма пăрахнă. Хулана пасара килнĕ колхозниксем хаçат киоскисене ырса чăвашла тухнă суйлав Положени кĕнекине ыйтаççĕ. Унта ăна сутмаççĕ. „Сойузпечăтĕн" республикăри кантурĕн директăрĕ Оçипăв йулташ каланă тăрăх, вăл кĕнекене кĕнеке магазинĕнче сутнă пирки „киоска илсе тухса сутма кирлех те мар" пек шухăшлана.

Киосксенче суйлав Положенийĕ çинчен калакан литературăсене çителĕклĕ таран тăратасчĕ.

Ив. М.

Аслă Совет суйлавĕ тĕлне кашни гражданин хут пĕлекен пултăр

СĔНТĔРВĂРРИ. Калинин облăçĕнчи Березайски йалсоветĕнчи общественнăç ССР Сойузĕн Аслă Советне суйлама хатĕрленнĕ май, хутпĕлменлĕхе пĕтерес тĕлĕшпе хăйсем пекех ĕçлеме Совет Сойузĕнчи мĕн пур колхозниксемпе колхозницăсене, культсекци членĕсене, культармейцăсене, учительсене тата мĕн пур общественнăçа социалисăмла ăмăртăва чĕннĕ. Çак чĕнĕве Сĕнтĕрвăрри районĕнче çентабĕрĕн 21-мĕшĕнче районри шкулсен директăрĕсемпе заведуйушчийĕсен канашлăвĕнче, çентабĕрĕн 21—26-мĕшĕсенче—учительсен сойузĕн районри конференцинче сӳтсе йавнă.

Кун хыççăн учительсем çак çыру çинчен йалсоветсемпе колхозсенче аслă пухусем туса, тĕплĕн ăнлантарчĕç.

— Чăн та Березайски колхозникĕсен çырăвĕ тĕрĕс. Пирĕн социалисăмлă тăван çĕршыври ĕççыннисем савăнăçлă та телейлĕ тапхăрта пурăнаççĕ. Сталинла Конституци Совет Сойузĕн граждăнĕсене ĕçлев, вĕренӳ, кану прави пачĕ. Партипе правительствă, пирĕн йуратнă çулпуçĕ Сталин йулташ ĕççыннисен пурнăçне лайăхлатса пырассишĕн кулленех кун тăрăшса ĕçленипе çак правасем пурнăçа кĕрсе пыраççĕ. Халь пирĕн çĕршыва Октăбĕрти социалисăмла революци 20 çул тултарнине пысăк çитĕнӳсемпе кĕтсе илет. ССР Сойузĕнчи Аслă Совета çĕнĕ суйлав саккунĕпе суйлама хатĕрленет. Çак аслă уйава хатĕрленнĕ май, ытти ĕçсемпе çитĕнӳсем туса пынипе пĕрлех, пирĕн хушăра хутпĕлменлĕхе йалтах пĕтермелле. Суйлавра пирĕн суйлав бюллетенне хамăрăнах вуласа тултарма пĕлмелле,—терĕç Камай йалĕнчи халиччен хут вĕренеймен çынсем пухура.

Пуху иртсен тепĕр кунах, çентабĕрĕн 25-мĕшĕнче, халиччен хут вĕренеймесĕр йулнă 26 çын вальли шкул уçрĕç. Çак шкулта Львовна Йефремăв учительсем ĕçлеççĕ. Вĕсем хут пĕлменнисене çырма, вулама, шутлама тата „ССР Сойузĕнчи Аслă Совета суйламалли Положенипе" Сталинла Конституцинe тĕплĕн вĕрентеççĕ.

Шуршăл йалĕнче те, Астрăв учитĕл тăрăшнипе, хутпĕлменнисемпе сахал пĕлекенсене йалтах тĕрĕслесе тухрĕç. Тĕрĕслесе тухсан паларнă хут пĕлмен 3 çынна, хут сахал пĕлекен 4 çынна вĕрентме пуçларĕç. Çентабĕрĕн 25-мĕшĕнчен пуçласа, çитĕннисен шкулĕсем Ĕсмĕлте, Аслă Астакассинче ĕçлеме тытăнчĕç.

Анчах районра хутпĕлменлĕхе пĕтерес тĕлĕшпе ытти йалсенче халĕ те ĕçе тивĕçлипех пуçăнайман-ха. Райçутĕç пайĕн ĕçлекенсем хутпĕлменлĕхе пĕтерес пирки учительсен канашлăвĕнче тата профсойузсен конференцинче сӳтсе-йавнипех лăплансa ларнă. Вĕсем вырăнсене тухса ĕçе татăклăн йĕркелес вырăнне, канцелярийĕнче отношенисем çырса вăхăта ирттереççĕ. Хăшпĕр учительсем çитĕннисене вĕрентес ĕç çинчен конференцинчен тухсанах маннă. Акă Водолейĕвă шкулĕнче вĕрентекен Логинăв:—Ей, çитĕннисене пит вĕрентмелех пулсан, районри çутĕç пайĕпе йалсовечĕ хăйсемех ĕçе пуçарĕç-ха, çитĕннисене вĕрентесси ман ĕç мар,—тесе чавраса ларат. Çак йалсоветĕнче иртнĕ çулта та хутпĕлменнисемпе сахал пĕлекенсем хушшинче пиркам та нимĕн те ĕçлемен. Ахальтен мар ĕнтĕ кунта хутпĕлменнисен йышĕ 36 çынпа йахăн шутланат.

Çулахи вăхăтра районри çутĕç пайĕ хутпĕлменнисене вĕрентесси çинчен пачах шутламан. Хутпĕлменнисемпе сахал пĕлекенсем халĕ Сĕнтĕрвăрри хулинче—84 çын, Карабаш йалсоветĕнче—66 çын, Утаçкасси йалсоветĕнче—43 çын, Амачкинă йалсоветĕнче — 42 çын, Кутемер йалсоветĕнче — 38 çын, Пукаш йалсоветĕнче—38 çын, Сĕнтĕрпуç йалсоветĕнче—54 çын шутланаççĕ. Вĕсенчен пĕтĕм районĕпе илсен, пайанхи кун тĕлне 881 çын нимĕнле шкулра та, нихăш йенчен те вĕренме тытăнман.

Райçутĕç пайĕ çак цифăра питех те аван курса тăрат, анчах ĕçе кирлĕ пек йĕркелеме тăрăшмаст. Çитĕннисене вĕрентес тĕлĕшпе малта пыракан йалсоветсен лайăх примерĕсемпе усă курма пĕлмест.

Вăхăт иртсе пырат. Суйлăв кунĕсем çывхарса килеççĕ. Васкамала. Партипе комсомол, профсойуз организацисен, йалсовечĕсемпе колхоз правленисен, учительсен колхозниксемпе колхозницăсем хушшинче хутпĕлменлĕхе пĕтерес ĕçе чăн-чăн большевикла хастарлăхпа тытăнмала. Аслă Совет суйлавĕ тĕлне кашни гражданин хут пĕлекен пултăр.

В. Васильйĕв.

Çитес кунсенче Ленинградра Российăра пирвайхи чукун çула туни 100 çул тултарнă йачĕпе выставкă уçалат.

ӲКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: Стефенсонăн „Ракета" пуйăсĕн моделĕ, ăна 1829 çулта Англире туса Манчестер чукун çулĕ çинче усă курнă.

Хайкин фото-ӳкерчĕкĕ (Сойузфото).

Йал çине ытларах пăхмала

ÇĔМĔРЛЕ (хамăр корр.). Хальхи вăхăтра партипе совет, комсомол организацийĕсем умĕнче тăракан чи пысăк задачăсенчен пĕри, вăл—ССР Сойузĕн Аслă Советне суйлама хатĕрленесси пулат.

Кашни колхозрах, предприйатипе учрежденирех суйлав саккунне тĕплĕн вĕренесси пырат. Суйлав саккунне вĕренме тытăнас умĕн предприйатисемпе колхозсенче 87 çĕрте пĕрлешӳлĕ пухусем туса ирттернĕ. Вăл пухусенче 576 çын тухса каласнă. Кунсăр пуçне йалсовет пленумĕсемпе ларăвĕсем 38 çĕрте пулнă. Партипе комсомол организацисенче пур çĕрте те пухусем туса ирттернĕ. Çакăнтан пуçăнса кайнă та ĕнтĕ суйлав саккунне тĕплĕн вĕренесси.

Ĕççыннисем суйлав саккунне пысăк хавасланхпа, тулли кăмăлпа вĕренме тытăнни çакăнтан та аван курăнат. Пĕтĕмпе колхозсемпе предприйатисенче, йалсоветсенче пулса иртнĕ пухусемпе канашлусенче, пленумсенче 5.585 çын пулнă (партипе комсомол организацисенче тата колхозри бригадăсенче пулса иртнĕ пухусемсĕр пуçне).

„ССР Сойузĕн Аслă Советне суйламалли Положенине" вĕренесси уйрăмăнах предприйатисенче анлăн саралса пынине палăртмала. „Большевик", „Труженик" савăтсенче, комбинатра, механизацилĕ вăрман пунктĕнче йатарласах агитаторсемпе семинарсем туса ирттернĕ. Пĕтĕмпе районта пропагандиссемпе агитаторсен семинарĕнчен 64 çын вĕренсе тухнă.

Пайанхи куна районĕпе 352 кружокра суйлав саккунне 6.104 çын вĕренет, 79 кружокран 2.955 çын вĕренсе тухнă. Çапла вара пĕтĕмпе суйлав саккунне вĕренессипе 9.959 çынна йатарласа уйăрнă кружоксене йавăçтарнă.

Заньатисенче суйлав саккунне вĕрентнипе пĕрлех тата Уранăв, Заковски йулташ çырнă йут патшалăх разведкисен ирсĕр ĕç меслечĕсемпе паллаштараççĕ.

Анчах та çулте кăтартнă ĕçсем тăрăх районта ССР Сойузĕн Аслă Советне суйлама хатĕрленесси çителĕклĕ таран пулса пырат, тесе çук. Çитменлĕхсем сахал мар-ха. Уйрăмăнах йединоличниксемпе колхозниксем тата килхуçи хĕрарăмĕсем хушшинче суйлав саккунне вĕренесси çителĕксĕр пырат. Районта килхуçи хĕрарăмĕсене вĕрентмелли 11 кружокра пĕтĕмпе те 140 çын çеç вĕренет. Хăшпĕр йалсоветсенче йединоличниксем хушшинче ĕçлессине манса кайнă. Акă Çĕмĕрле йалсовет председателĕ Йегорăв ун пирки çапла калать:

— Йединоличниксем мар-ха, епĕр хамăр та нимĕн те пĕлместпĕр. Малтан хамăрăн вĕренмелле,—терĕ.

Хăçан вĕренсе тухаççĕ-ши вара вĕсем? Хăйсем (йалсоветра ĕçлекенсем) ӳркеннĕ пирки ку таранччен те йалсовет активĕсемпе 2 хутчен çеç заньати туса ирттернĕ. Колхозниксем хушшинче тытăнман та. Комсомолĕссем те суйлав саккунне пĕлмеççĕ, заньатисенче пулман.

Хăшпĕр çĕрте тата пропагандиссемпе агитаторсем пăтраштарса вĕрентеççĕ. Акă комбинатра—Пономарйова, рабкоопра—Мохăв йулташсем Национальносен Советне мĕнле суйламалли ыйтăва тĕрĕс мар ăнлантарса панă. Ку ĕнтĕ агитаторсем хăйсем тĕплĕн ыйтăва ăнланманнине пĕлтерет. Малашне ăнлантару ĕçне колхозсенче, йалсоветсенче ытларах сарса йамала. Суйлав саккунне пĕр ĕççынни те пĕлмесĕр ан йултăр.

Хар. Лисин.

Кружок руководителĕсем—комсомолĕссем

ИШЛЕЙ. Тарăнçырма йалсоветне кĕрекен „Комбайн" тата Липетерти колхозра „ССР Сойузĕн Аслă Советне суйламалли Положенине" вĕренме кашни бригадăрах кружоксем, пурĕ 6 кружок, организациленĕ. Кружок заньатийĕсем 5 кунта пĕрре пулса иртеççĕ. Кружокра вĕренекенсем суйлав саккунĕ çинчен ăнлантарнине лайăх итлесе ларса, вĕренсе пыраççĕ. Кружок руководителĕсенче учительсемпе комсомолĕссем ĕçлеççĕ.

Гер. Шчербаков.

102 ыйту панă

КӲКЕÇ. Анаткасси йалсоветĕнче „ССР Сойузĕн Аслă Советне суйламалли Положенине" тĕплĕн вĕренсе пыраççĕ. Кашни йалта колхозниксемпе йединоличниксен пĕрлешӳлĕ пухувĕсенче ăнлантарса пама учительсене, культработниксене çирĕплетнĕ.

Ку вăхăта çите йалсоветра 673 çынна суйлав саккунĕ çинчен ăнлантарса панă. Пĕтĕмпе 102 ыйту пулнă.

Й. Васильйĕв

Мĕн ăнланнине каласа параççĕ

ЕЛĔК. Мăн Шĕвĕшри „Правда" колхозра „ССР Сойузĕн Аслă Советне суйламалли Положенине" вĕренмелли кружоксене Й. Йефимăвпа П. Куприйанăв йертсе пыраççĕ.

Й. Йефимăв учитĕл Аслă Совета мĕнле майпа суйлассине тĕплĕн каласа ăнлантарат. Положенин кашни статйинех уйрăмăн вуласа тухса, ун çинчен тепĕр хут тĕплĕн ăнлантарат. Кайран вара колхозниксем хăйсем мĕн ăнланни çинчен туха-туха каласа параççĕ.

Ватă колхозниксем ĕлĕкхи вăхăтра мĕнле „суйлавсем" пулни çинчен аса илсе тухса калаççĕ.

Н. Капитонăв.

Октăбĕр умĕнхи ăмăртура

УЛАТĂР. Çиччĕмĕш номĕрлĕ вăрман савăтĕнче ĕçлекен рабочисемпе служăщисем ăмăртăва тухса, кашни кунхи ĕç нормине ытлашшипех тултарса пыма сăмах пачĕç.

— Хамăр çине обйазательствă илсе,епĕр хамăр нормăна ытлашшипех тултарса пырса, çулталăк планне Октăбĕр революцин 20-мĕш уйавĕ тĕлне 120 процент кайа мар тултарма пулатпăр, терĕ Верешчагин йулташ.

Верешчагин йулташ хăйĕн бригадипе плана 125 процент, Аганăв кашни кулленхи ĕç нормине 134 процент тултараса пыраççĕ.

А. Иванов.

Е. Власова

Октăбĕр умĕнхи хуçалăх ишĕлни

(20 çул кайала)

Капиталиссем йут çĕрсене туртса илме пуçарса йанă 1914 çулхи империалисăмла вăрçă пур çĕршывсенче ĕççыннисене те калама çук пысăк инкексем кӳнĕ. Российăн, кайа йулнă çĕршывăн, чи пысăк йăвăрлăхсем тӳсмелле килнĕ. Унăн производителлĕ вăйĕсем чакса кайнă, ĕççыннисем çука йулнă, вĕсене вырăх, хуçалăх ишĕлни асаплантарнă,—çĕршывра çакăн пек лару-тăру пулнă 1917 çулхи февральти революци çĕнтернĕ хыççăн.

Пурнăç çавăн пек тӳсме çук йăвăрланса кайнинчен хăтăлма, çапла пыракан вăрçа чарса лартма, çĕршыва пуса илсе пыракан ишĕлӳве сирме, выçлăхпа кĕрешме татăклă ĕçсем туни кирлĕ пулнă. Большевиксем çинчех мир тума, улпутсен пĕтĕм çĕрĕсене хресченсене пама, шурăра промышленнăçпа банксене национализацилеме, производствăра тата продуктăсене валеçнĕ çĕрте рабочисен контрольне тума сĕннĕ. Çак ĕçсене пролетариатăн революцилĕ диктатури çеç пурнăçа кĕртме пултарнă.

Буржуазин Вăхăтлăх правительстви, унчухнехи Советсене кĕрсе ларнă меньшевиксемпе ес-ерсем пулăшнипе, пур тĕп ыйтусем тăрăх та патша правительствин политикине малала туса пырса, çĕршывăн хуçалăхĕ ишĕлсех анассине васкатса пынă. Вăл, Вăхăтлăх правительствă, „çĕнтеричченех вăрçас" политикăна тытса пырса, çĕршыв хуçалăхне татах хавшатса, ĕççыннисене чăтма çук йăвăрлăхсем тӳстерсе пынă. Унтан та ытларах, Вăхăтлăх правительствă, Англипе Франци тата вырăс буржуази хĕтĕртнипе, рабочисемпе салтаксене ирĕксĕрлесе, фронтра наступлени пуçарса йанă, çав наступлени пит ăнăççăр пулнă, калама çук пысăк инкек кӳнĕ.

Рабочисем, салтаксем тата хресченсем ыйтнисене Вăхăтлăх правительствă пĕрне те тумаст. Вăл халăх инкекĕ çинче пуйса пынă помещиксен тата капиталиссен интересĕсене пĕтĕм вăйран сыхланă. Вăхăтлăх правительствă хуçалăха ишĕлтерсе революцийе пăвса пăрахасшăн пулнă.

Февральти революци хыççăн урăхçĕршывсенчен йанă пирвайхи çырăвĕсенчех Ленин çапла çырнă: „Çĕнĕ правительствă мир пама пултараймаст, мĕншĕн тесен вăл капиталиссемпе улпутсен представителĕ пулса тăрат, тата вăл Англипе Франци капиталисĕсемпе догăварсемпе тата укçа-тенкĕ тĕлĕшпе обйазательствăсемпе çыхăннă.." „Çĕнĕ правительствă халăха çăкăр пама пултараймаст". Çĕнĕ правительствă 8 сехетлĕ ĕçкунĕ пама тата рабочисен економикăлă пурнăçне урăх йенпе лайăхлатма пултараймаст. Вăл „хресченсене вальли çĕр çинчен, улпутсен пĕтĕм çĕрĕсене тӳлевсĕрех хресченсене парасси çинчен" нимĕн те каламаст, „çак чи кирлĕ ыйтусем пирки нимĕн те шарламаннипе вăл хăй капиталисла тата улпутла иккенне кăтартса тăрат" (Сочин., том XX, стр. 10—11).

Унчухне Советсенче ларнă меньшевиксем тата ес-ерсем буржуази умĕнче тăвата уран утнă, буржуази ĕçне туса революцийе сутнă. Вĕсен, меньшевиксемпе ес-ерсен, сутăнчăклă политикине пула, ийуль кунĕсенче влаç пĕтĕмпех буржуази аллине куçнă.

Советсем хăйсене хăйсемех вăйсăрлатса хăварнă та, вĕсем буржуалă правительствăн пайĕ пулса тăнă. Пĕр вăхăтрах икĕ влаç пулни вырăнне контрреволюцилле буржуазин влаçĕ пĕччеnех пуç пулса тăнă. Контрреволюци пуçне çĕкленĕ те рабочи клас çине тата унăн партийĕ çине—большевиксен партийĕ çине тискер кайăкла тапăнма тытăннă. Буржуази революцийе, революцилĕ организацисене пурне те уççăнах çĕмĕрсе тăкма тытăннă (Корнилăв пăлхавĕ). Вăл буржуазин контрреволюцилĕ диктатурине туса хурса, революцире кĕрешсе илнĕ демократилĕ йĕркесене пĕтерсе хурасшăн пулнă тата революцилĕ рабочисемпе хресченсене тискер кайăкла тулласа тăкасшăн пулнă.

Большевиксем йертсе пынипе рабочисем тата салтаксем буржуазин йунлă ĕмĕчĕсене аркатса тăкнă—Корнилăв пăлхавне пусарнă.

„Корнилăв восстанийĕ пухăнса çитнĕ революцилĕ тăрăху вальли клапан уçрĕ çеç, вăл таланнă пулнă революцийе вĕçертсе йачĕ, ăна хускатрĕ тата малала йачĕ" (Сталин, „На путях к Октябрю", стр. 206).

Анчах влаç буржуази аллинчех йулнăха. Вăл çĕршывра выçлăх организацилес, економикă тĕлĕшпе контрреволюци тăвас политикăна малала тытса пынă. Ахаль мар ĕнтĕ Мускаври паллă фабрикант Рйабушински революци кĕрешсе илнисене пурне те выçлăхăн шăмăллă аллисемпе пăвса пăрахатпăр тесе хăмсарнă. Економикăлă пурнăçăн пур йенĕсем тĕлĕшпе те Вăхăтлăх правительствă, Корнилăв пăлхавĕ пуличчен те, çав пăлхав хыççăн та, Корнилăвла политикă тытса пынă. Вăл çĕршывăн хуçалăхне хăвартрах ишĕлтерсе йарса, революцийе пăвса пăрахассине сывхартма тăрăшнă. Пĕтĕм Российăри хапрăк-савăт хуçисем каварлашса, хапрăк—савăчĕсене ĕçлеме чарса лартасшăн пулнă. „Торгово—промышленная газета"—шултра буржуази хаçачĕ—уççăнах çапла çырнă: „Савăтсене хупсан тем пекех йăвăр килет пулсан та, анчах урăх май çук пулсан, çавăнпа та пулин рабочисене тăна кĕртес пулат". Тимĕр-тăмăр промышленнăç савăт хуçисен пĕтĕм Российăри сйесĕ: рабочисене нимĕнле уступкă та пама йурамаст, вĕсене „Советсен Совечĕ" (шултра буржуазин организацийĕ) тулласа тăкассипе хăратмала, тесе каланă. Мартăн 1-мĕшĕпе ийуль уйăхĕн йулашки кунĕсем хушшинче Российăра 568 предприйати хупса лартнă, вĕсенче 104.372 рабочи ĕçленĕ пулнă. Петроградра октăбĕр уйăхĕ тĕлне 40 предприйати хупса лартнă. Мускавра хапрăк-савăт хуçисем 300 пин çын рабочисемпе работницăсене ĕçрен кăларса йарасшăн хăратнă. Уралра предприйатисенчен çуррине хупса лартнă, ĕççĕр йулнă рабочисем 60 пин çын ытла пулнă.

Хапрăксемпе савăтсене хупса лартнипе пĕрлех, буржуази тата Петроградa „пушатма" тытăннă. Савăтсене, уйрăмах — тимĕр-тăмăр савăчĕсене, „куçарма" пуçланă. „Куçарса кайнă" савăтсенче ĕçленĕ пулнă рабочисемпе работницăсем ĕççĕр тăрса йулнă.

Ленин хăйĕн „Грозящая катастрофа и как с ней бороться" йатлă историлĕ статйинче çапла çырнă:

„Капиталиссем, халиччен нихçан илтмен-курман катастрофă республикăна тата демократисăма, Советсене тата пролетарисемпе хресченсен сойузĕсене пĕтĕмпех пĕтерсе хурĕ, монархи патне таварнассине тата буржуазипе улпутсем пур йенпе те пуç пулса тăнине таварасси не çăмăллатĕ текен шанчăкпа, йурийĕх тата çине тăрсах производствăна саботаж тăваççĕ (пăсаççĕ, чарса лартаççĕ, ишĕлтереççĕ, чăрмантараççĕ)", (Сочин., том XXI, стр. 159).

Вăхăтлăх правительствă политикине пула продуктăсен хакĕсем калама çук ӳссе кайнă. Ĕç министерствин материалĕсем тăрăх та çакă паллă пулнă. Çимелли тĕп продуктăсен хакĕсем Мускавра вăрçă вăхăтĕнче 836 процент ӳснĕ, куллен кирлĕ таварсен хакĕсем 1.109 процент ӳснĕ. Вăхăтлăх правительствă, спекулянтсене çăвăрлăхлас тесе нимĕн те туманскер, август уйăхĕнче тырă хакне 100 процент ӳстернĕ. Çавна тунипе вăл улпутсемпе кулаксене икĕ мĕлйард тенкĕ кучченеç панă. Хаксене ӳстернĕ пулин те, патшалăх тырă хатĕрлени чаксах пынă, улпутсем, кулаксем тата спекулянтсем тырра пытарнă, çав вăхăтрах ĕççыннисем кăшт та пулин çăкăр илессишĕн сехечĕ-сехечĕпе черетсенче тăнă. Петроградри тата Мускаври рабочисене çентабĕрпе октăбĕр уйăхĕсенче кунне çур кĕрепенкерен те сахал çăкăр панă, урăх хуласенче унтан та сахал панă. Октăбĕрĕн пирвайхи вунă кунĕ хушшинче Петроград вальли пурĕ те 40—50 вакун çеç тырă панă, кирлĕ пулнă 400 вакун.

Нефтă промыслисен хуçисем нефтă пытарнă, ăна кирлĕ çĕре илсе кайма чăрмантарнă. Донецк бассейнĕнче капиталиссем кăмрăк хакне спекулянтла хăпартса йарас тесе кăмрăк запасĕсене пытарнă. Правительствă саботаж тунăшăн премисем панă пекех кăмрăк хакне ӳстерсе пынă. Кăмрăк кăларасси уйăхран уйăха чакса пынă, ийуль уйăхĕнче 119 мĕлйун пăт, августра—115 мĕлйун пăт, çентабĕрте—110 мĕлйун пăт кăларнă.

Транспăрт та çавăн пекех йухăнса пынă. Çӳреме йурăхсăра тухнă вакунсемпе паровозсен хисепĕ куллен кунах нумайланса пынă.Ийуль кунĕсем хыççăн транспăрт çинче ĕçсем тата пушшех хытă улшăннă. Профсойузсен тата чукунçул комитечĕсен пĕчĕк прависене те пĕтерсе хунă. Чукунçулсем çинче ĕçлекенсене хĕсĕрлеме пуçланă. Хаксем пит ӳссе кайнă пулин те, чукунçулсем çинчи рабочисемпе служăщисен ĕçукçине ӳстермен. Вырăнĕ-вырăнĕпе чукунçулсен администрацийĕ рабочисемпе служăщисене вальли çимĕççем кӳрес ĕçе чарма пикеннĕ. Чукунçулсене çар йĕрки çине куçарнă. Çапла ĕнтĕ, чукунçулсем çинче те тăтăшах корнилăвла политикăна пурнăçа кĕртсе пынă. Салтаксем фронтран массăлăн тарнипе тата спекулĕцпе выçлăха пула мешочниксем нумайланса кайнипе, чукунçулсен ĕçĕсем пушшех пысăк йăвăрлăха кĕрсе ӳкнĕ. Çавна пула, тийемелле пулнă çĕртенех—ийуль уйăхĕнче 200 пин вакун, август уйăхĕнче 248 пин вакун тийемесĕр йулнă. Октăбĕр уйăхĕнче вакунсене 1916 çулта тийенинчен 34 процент кайа тийенĕ. 1917 çулхи кĕркунне чукунçулсен ĕçĕсем чарăнсах ларас хăрушлăх пулнă, вара вăл çĕршывăн пĕтĕм хуçалăхлă пурнăçне аркатса пăрахма пултарнă.

Финанс ĕçĕсем арканса кайни хуçалăх катастрофине çывхартнă. Вăрçă вальли çулленех 66,6 млн. тенкĕ пĕтернĕ. Укçа хакĕ калама çук хăвăрт чакса пынă. Вăл хăй черечĕпе пĕтĕм халăх хуçалăхне тĕпсĕр шыранала тĕртсе пынă. Керенски правительстви вĕçĕмсĕрех хут укçа пичетлесе пынă, вăл урăх нимĕн те тума пултарайман. Хут укçа нумай çапса кăларнипе, тата Вăхăтлăх правительствăн пĕтĕм политикине пула, çентабĕр—октăбĕр уйăхĕсенче пĕр тенкĕ укçапа вăрçăччен вунă пуспа илнĕ чухлĕ çеç тавар илме пулнă. Вăхăтлăх правительствă налогсем шăйăрса илессине вăйлатсах пынă. Вăл, буржуази пысăк усламĕсене сыхласа, налогсен пĕтĕм йăвăрăшне ĕççыннисем çине тийенĕ.

Вăхăтлăх правительствă хресченсем тĕлĕшпе те çавăн пекех корнилăвла политикă тытса пынă. Вăл çĕр улпутсен аллинчех пулассине хытă сыхланă. Йалти пусмăрлă йĕркесем пурте патша Российĕнчи пекех йулнă. Çавăнпа пĕтĕм çĕршывра хресченсен йухăмĕ аслă шыв пек сарăлса кайнă, хресченсем çĕршĕн пит çивĕччĕн кĕрешнĕ.

Хресченсен совечĕсене кĕрсе ларнă ес-ерсем тем пекех хирĕç тăна пулин те, хресченсен восстанийĕсем тапраннă. Хресченсен восстанийĕсем март уйăхĕнче 34 уйезра, ийуль уйăхĕнче—325 уйезра пулнă. Керенски хресченсене пусарма, улпутсене хӳтлеме çарсем йанă, революцилĕ хресченсене тата вĕсен комитечĕсене тустарнă.

Буржуази, улпутсемпе сойузлă пулса, Столыпин политикине чĕртсе тăратма хăтланнă. Çав политикă вăл—кулаксене пулăшса пырса, „вăйлă хуçасем" çине тайăнса, революцилĕ хресченсене çĕмĕрессипулнă. Ку политикă çумне тата йалхуçалăхне тăтăшах аркантарса пырас политикă хушăннă. Улпутсем Рйабушински вĕрентни хыççăн пынă—вĕсем çĕрĕсене актарман, пулнă тырпула пуçтартарман, пĕтерттернĕ; выльăх-чĕрлĕхсене пустарнă. Улпутсем, капиталиссем пекех, революцийе пăвса пăрахасчĕ тесе ĕмĕтленнĕ çеç мар, выçлăхăн шăмăлă аллипе революцийе пыртан йарса илес тесе мĕн тума май килнине пурне те тунă.

Буржуази выçлăх организациленĕ, халăх хуçалăхне никĕсĕнченех çĕмĕрсе пынă, çĕршывăн пĕтĕм хуçалăхне аркантарса йарасшăн пулнă, çине тăрсах корнилăвла политикă тытса пынă, а хăй çав вăхăтрах революцийе тата революцилĕ организацисене айăпланă. Кун çинчен пролетари революцин аслă çулпуçĕ В. И. Ленин çапла çырнă:

15

Комсомолăн облăçри XIV-мĕш конференцийĕ

Коротков йулташ сăмахĕ

(Кољцовкăри Сталин йулташ йачĕпе тăракан колхоз председателĕ)

Комсомолăн облăçри конференцине епĕ пуçласа пулатăп. Мана комсомол Обком пленумĕн членне те хамсăрах, заочнă, суйланă. Тÿрех калатăп, епĕ пленум членĕнче начар ĕçлерĕ. Обкомол пленумĕнче те 1—2 хут çеç пулнă.

Халăх тăшманĕсем промышленнăçра çеç мар, колхоз строительствинче те сăтăрла ĕçсем тунă. Пирĕн колхозра вăтам шкулта Семйонăв текен троцкис сăтăр туса пурăннă. Унăн сăтăрла ĕçĕсене палăртнă хыççăнах епĕр кирлĕ органсене пĕлтертĕмĕр. Анчах пирĕн сигнала итлемерĕç. Вăрнар райĕçтăвком председателĕ Афиногенăв хÿтĕленипе Семйонăн троцкис Кољцовкăрах хĕсĕнсе йулчĕ. Тепĕр факт. 1935 çулта Кољцовкă колхозне Çĕмĕрле районĕнчен Мумикăв килет. Халĕ пирĕншĕн паллă Мумикăв халăх тăшманĕ пулни. Ахаљтен мар вăл йалхуçалăх ертелĕн уставне сÿтсе-йавнă чухне колхоз пухăвне салатса йама тăнă. Акă тата тепĕр тĕслĕх. 1935 çулта епĕр калаçакан кино туйантăмăр. Кино ĕçне хамăр ăнланман пирки Мускаврап инженер чĕнтĕмĕр. Калаçакан кино лартса пачĕç. Анчах нумай вăхăт та иртмерĕ, кино будкинчен вутă-çулăм шăрпи тухма пуçларĕ. Кино кăтартнă вăхăтра будкă патне хурал тăратрăмăр. 6-мĕш кунне пирĕн кино будкине вут хыпса та илчĕ. Нумай çунмах памарăмăр. Кунта сăтăрçă ĕçĕ куç умĕнчех. Лапчук шпион йурийĕх кино будкине çунса каймалла туса хăварнă. Вăхăтра „кирлĕ мерăсем йышăнман пулсан, 30 пин тăракан клуб çунса кайатчĕ. Кунсăр пуçне тата калаçакан кино аппарачĕ 45 пин тенкĕ, радиоузĕл 20 пин тенкĕ тăрат. Кусем те çунса кайма пултаратчĕç. Вăт халăх тăшманĕсем колхозра мĕнле сăтăрла ĕçсем тăваççĕ. Çавăнпа та халĕ пĕтĕм вĕйа халăх тăшманĕсен сăтăрла ĕçĕсен йулашкисене пĕтерсе, колхоз строительствине вăйлатас ĕç çине хумала.

Клас тăшманĕсем питĕ чейе майсемпе ĕçлеççĕ. Вĕсем халĕ „колхозра пурнăç начар" тесе уççăн каламаççĕ, мĕншĕн тесен вĕсене колхозниксем часах тăрă шыв çине кăлараççĕ. Колхозниксен пурнăç условийĕ кунран кунах лайăхланса пырат. Çавăнпа та халĕ колхозник совет влаçне, коммунистсен партине тата çул пуçне Сталин йулташа нихăçанхи пек мар йуратат.

Кĕпĕ хамăр колхоза илсе кăтартасшăн. Кăçал епĕр 700 гектар çĕр çинче 118 пин центнер тырă туса илетпĕр. Кашни гектар 25 центнер тырă парат. Пирĕн колхозниксем 77 пин ĕçкунĕ тунă. Кашни ĕçкунĕ пуçне пĕр пăт тĕп тырă тивет. Вирĕ çул кайарах пирĕн колхозра лайăх ĕçлекен колхозник пĕтĕм килйышĕпе 200—250 пăт тырă илнĕ пулсан, кăçал икĕ ачалă хĕрарăмсем 200-шар пăт тĕп тырă илеççĕ. Колхозра стахановцăсем 1300 пăт таран тĕп тырă илеççĕ. Вăт ăçта пуйан пурнăç!

Халăх тăшманĕсем лайăх ĕçлекен колхозсене ытларах сăтăр тума тăрăшаççĕ. Çавăнпа та пирĕн политикăлă сисĕмлĕхе çÿле тытни кирлĕ. Пирĕн комсомол организаци производствă ĕçĕшĕн хăйĕн чунĕх парат, анчах епĕр политикăлă суккăрлăхран хăтăлайман-ха.

Пирĕн колхоза малта пыракан колхоз вырăнне шутлаççĕ. Пирĕн пурин те бољшевикла колхозшăн, колхозниксене пуйан та куљтурăлă тăвассишĕн кĕрешмеле. Малта пыракан колхозсен лайăх ĕç опычĕсене сармала. Анчах комсомол обкомĕн секретарĕ пулнă Сымокин мана чĕнсе, епĕ мĕнле ĕçлени çинчен отчот итлемен. Епĕ пленум членĕ, манăн çитменлĕхсене кăтартнă пулсан, манăн ĕç татах та лайăх пулма пултаратчĕ. Сымокин калаçма йуратнă, анчах ĕçĕ пулман. Сымокин йапăлтатма, йурама йуратнă. Кирек мĕнле вăйă выљасан та, Сымокин ташлат. Сымокин кам умĕнче йапăлтатнă?—тесе ыйтаççĕ манран. Сымокин — Токсин, Кузнецов умĕнче йапăлтатнă, кăна микроскопсăр, ахаљ куçпах пăхса курма пулат.

Йулашкинчен епĕ хамăр шкулти ĕçсем çинчен каласшăн. Пирĕн шкулра ĕçсем йĕркелех мар, кун çинчен епĕр хамăр комсомол организацине те каласнă. Вăтам шкулта 5 преподавателĕ çитмест. Сутĕç халăх комиссариачĕ пирĕн çине çавăрăнса та пăхмаст. Шкулта 350 çын вĕренет. Вĕсенчен пионерсем чылай. Пионер вожатăйĕнче Мумикăв тăшман ĕçленĕ.

Кунта манран калаех: „Есĕ пленумсене мĕншĕн çÿремен?" тесе ыйтаççĕ. Тĕрĕс ыйту. Пленум пĕтиччен туха кайнисем те пулнă манăн. Ку айăпа йышăнатăп. Малала ку çитменлĕхе пĕтерме тăрăшăп. Ку таранччен епĕ çителĕксĕр ĕçленĕ. Хамăн çитменлĕхсене пĕтерме пулнине епĕ сăмахпа мар, ĕçпе кăтартăп.

Пуйан пурнăçра

Вăрăмтури (Ишлей р.) „Хĕрлĕ плуг" колхоз членĕ Литвинăн колхоза кĕнĕренех коњухра пурăнат. Вăл лашасене мăнтăр, таса усрассишĕн тата апат хатĕрлесе, тирпейлĕ тыткалассишĕн чунтан тăрăшса ĕçлет.

Литвинăв çемйинче ĕçлекен 3 çын. Вĕсем мĕн пурĕ 542 ĕçкунĕ тунă. Тырпула валеçиччен 600 ĕçкунне çитерессишĕн тăрăшаççĕ. Кашни ĕçкунĕ пуçне 8 килограм тĕштырă валеçĕнет. Çапла кăçал Литвинăв Иван çемйи 300 пăт ытла тĕштырă илет. Литвинăв Иван, пĕчĕкрен апшĕсĕр ÿснĕскер, колхоза кĕриччен начар пурăннă, халĕ çĕнĕрен килçурт çавăрса куљтурăлă пуйан пурăнма пуçларĕ. Унăн килĕнче çĕвĕçĕлемели машинă, сехет, тĕкĕр т. ыт. паха йапаласем пур.

Çавăн пекех Петров Александр çемйи те стахановла ĕçлесе 650 ĕçкунĕ ĕçлесе тунă. Петров халĕ Хĕрлĕ çара кайрĕ. Хăйĕн çемйине ваљли чылай тырă тата ытти çимĕçсем çителĕклĕ туса хăварнă.

„Манăн çемйе мĕнле пурăнĕ-ши, тесе епĕ куйхăрмастăп, Хĕрлĕ çара чунтан хĕпĕртесе тухса кайатăп", тет Петров колхозник—стахановцă.

Й. Йефимăв.

„Кадетсем тискеррĕн савăнаççĕ: революци крах тÿсрĕ пулат вара, революци вăрçăна та, йухăнчăка та чараймĕ пулат.

Тĕрĕс мар. Кадетсем тата ес-ерсемпе меншевиксем крах тÿснĕ, мĕншĕн тесен çав блок (сойуз) çурçул Российăна тытса тăнă, çурçул хушшинче йухăнчăка вăйлатрĕ, вăрçăри ĕçне пăтрантарса тата йавăрлантарса йачĕ.

Буржуази ес-ерсемпĕ тата меншевиксемпе тунă сойуз тÿсекен крах мĕн чухлĕ туллирех пулĕ, халăх çавăн чухлĕ хăвăртрах вĕренсе çитĕ. Çавăн чухлĕ хăвăртрах вăл шанчăклă çул тупĕ: вăл—чи чухăн хресченсен, урăхла каласан, хресченсен нумайрахăшĕн пролетариатпа тунă сойуз". (Сочин., том XXI, стр. 192).

Бољшевиксен партийĕ, Ленин тата Сталин йертсе пынипе, çĕршыва хăратса тăракан катастрофăна сирсе йамали ĕçсен программине туса хатĕрленĕ. Бољшевиксен партийĕ рабочисене производствăна тата продуктăсене валеçсе тăрас ĕçе контрољ тума, çапла вара буржуази иртĕнсех саботаж тата спекуљаци тунине пĕтерсе хума чĕннĕ. Бољшевиксен партийĕ ес-ерсене тăрă шыв çине кăларнă (ес-ерсем хресченсене „тÿссе пурăнма" чĕннĕ),—вăл хресченсене хăйсен çĕр комитечĕсене тума тата çирĕплетсе пыма улпутсен çĕрĕсене вăйпах туртса илме чĕнчĕ. Ленин—Сталин партийĕ улпутсен çĕрĕсене конфискацилессишĕн, пĕтĕм çĕре национализацилессишĕн (патшалăх аллине илессишĕн) тăнă. Бољшевиксен партийĕ трестсене пĕрлешнĕ промышленнăçа тата банксене национализацилеме чĕннĕ,—ку вăл халăх хуçалăхĕн ĕçе татса паракан позицийĕсене рабочисем контрољ туса тăмала тума кирлĕ пулнă. Бољшевиксен партийĕ империалисăмла вăрçа чарса лартмали пĕртен пĕр тĕрĕс çул кăтартса панă. Ленин—Сталин партин економикăла платформине пурнăçа кĕртме—буржуази влаçне сирпĕтсе антармала пулнă, чи чухăн хресченсем çине тайăнса тăракан пролетари влаçне туса хумала пулнă. Вăл, Ленин—Сталин партийĕ, рабочисемпе хресченсене, Совет влаçĕшĕн çапăçăва тухма чĕннĕ.

Бољшевиксен партийĕ кăтартса панă çулпа пырсан çеç çĕршыва хуçалăх ишĕлнинчен хăтарма пулнă. Бољшевиксен лозунгĕсем массăсен куçĕсене уçнă тата массăсене буржуазипе килĕшнине çăлăнма пулат текен суйа ĕмĕтсенчен тасалма пулăшнă. Массăсен политикăла ăнланувĕ ÿсесси, вĕсем „бољшевикланни" улăпла утăмсемпе пулса пынă. Ку вăхăт çинчен Сталин йулташ çапла çырнă:

„... Çак сакăр уйăх, массăсене политикăла çутта кăларас тата революцилĕ воспитани парас тĕлĕшрен, хăйулăнах йаланхи пек конституцилĕ аталанăвăн вунă çулĕпе пĕр тан пулма пултарат, мĕншĕн тесен вĕсем революцин сакăр уйăхне пĕлтереççĕ". („Ленинисăм ыйтăвĕсем", 10-мĕш изд., стр. 38).

Рабочи класпа хресченсем хушшинче тата çарта пирĕн партин влийанийĕ хăвăрт ÿссе, çирĕпленсе пынă.

Бољшевиксен парти, çаратулă вăрçа хирĕç, буржуалă правительствăна хирĕç, буржуазине пулăшакансене — меншевиксемпе ес-ерсене хирĕç, революци штрейкбрехерĕсене хирĕç кĕрешсе, ĕççыннисен интересĕсене хытă сыхланă. Çавăнпа ĕççыннисен массисем бољшевиксен партине вĕçĕмсĕр шанса тăракан пулса çитнĕ. Çапла вăл Аслă социалисăмла революци çĕнтермеле тунă. Ку çĕнтерÿве рабочи клас тата чи чухăн хресченсем Ленин тата Сталин йертсе пынипе, Ленин—Сталин партийĕ йертсе пынипе тунă. Социалисăмла революци çĕнтерни çĕршыва пĕтесрен хăтарнă. Октябĕрти социалисăмла революци çĕнтернĕ кун—1917 çулхи нойабĕрĕн 7-мĕшĕнче—„Российăри граждăнсене" йатлă возванире Ленин çапла çырнă: „Халăх уншăн кĕрешнĕ ĕç: халăх демократилĕ мир сĕнесси, çĕр улпутсен харпăрлăхĕ пулса тăнине пăрахăçа кăларасси, производствăра рабочисен контрољне тăвасси, Совет правительствине тăвасси—çак ĕç пурнăçа кĕчĕ". (Сочин., том XXII, стр. 3).

Етемлĕх историнче çĕнĕ тапхăр пуçланчĕ: Аслă Социалисăмла революци ССР Сойузĕнче социалисăм çĕнтерĕвĕ патне илсе çитерчĕ.

Совет çĕршывĕ хĕрÿлĕн ССР Сойузĕн Аслă Советне суйлама хатĕрленет.

Ленинград облăçĕнчи Боровичи хули совечĕ суйлавçăсен списокĕсене тăвас ĕçе пуçарса йачĕ.

ÿКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: Ирĕклĕх йачĕпе тăракан урамри 16—17-мĕш çуртсенчи уполномоченнăй М. М. Данилевич пуранакансен спискине хула советне парат.

А. Козлов фото-ÿкерчĕкĕ (Сойузфото).

Жÿри Çĕмĕрле хулинчи художĕствăлă пултарулăха мухтарĕ

Радиофестивалĕн 5-мĕш кунĕ

Çĕмĕрлери предприйатисенчи, шкулсенчи хор кружокĕсемпе оркестрсем тата уйрăм исполнителсем республикăри 2-мĕш радиофестивале ытти районсенчен лайăх хатĕрленнĕ. Хулари пултарулăх смотрĕнче 600 çын ытла комиççи витĕр тухнă. Фестиваљри выступленисене массăлăн итлес ĕçе организацилевĕ т. ыт. те. Çĕмĕрле хули, иртнĕ çулхисемпе танлаштарсан, тĕлĕнмеле ÿсĕмсем тунă. Ăна фестиваљри выступленисем уççăн кăтартса пачĕç. Фестиваљ пуçланнăранпа хăйсен пултарулăхне Çĕмĕрле пек туллин тата пысăк пахалăхпа кăтартнă районсемпе хуласем урăх пулман-ха, кăна татсах калама пулат.

Çĕмĕрле хулин выступленийĕ „Песня о родине" йурăпа пуçланчĕ. Ку йурра комбинатри рабочисен хорĕ (Лебедĕв й-ш йертсе пырат, хĕрта 32 çын) пултарулăн тата пысăк çĕкленÿпе йурласа пачĕ. Хор йурланă „Такмаксем" те çавăн пекех аван йанăрарĕç. Çĕмĕрле выступленинче пуринчен ытларах уйрăм исполнителсем хăйсен пултарулăхĕ пирки аван шухăш хăварчĕç. Сăмахран „Бољшевик" савăтри рабочи Енжайĕв Илйа байанпа „Такмаксене" тата „Буденнăй маршне" питĕ лайăх кÿртерчĕ. 7-мĕш класра вĕренекен хĕрача Лизă Çевина „Партизан Железняк" йурра, Куйбышĕв йачĕпе тăракан вăтам шкулра 9-мĕш класра вĕренекен Лайма Рудзит—„С нами поет вся страна" йурра, Иакимовă Антонинă Тељмăн çинчен хунă йурра, Соколовă —„Не искушай" йурра (Глинкă муз.) уйрăмăнах кăмăла каймала йурласа кăтартрĕç.

Художĕствăлă пултарулăх профессионаллă искусствă ваљли çĕнĕрен çĕнĕ талантсем çуратса паракан çăлкуçĕ пулса тăрат. Пултарулăх ĕçне йуратакансем хăйсем çĕнĕ йапаласем шухăшласа кăлараççĕ. Тĕслĕхрен, Çĕмĕрле клубĕнче ĕçлекен куљтработнике Борис Беспалăвах илер. Вăл фортепийанинăпа хăй çырнă ваљс кĕввине питĕ килĕшÿлĕ выљарĕ. Кĕвви те кăмăллă, выљани те аван.

Çĕмĕрле районĕнчи фестиваљ комиççийĕ хулари пултарулăха кăтартма пĕлнĕ, чи лайăххисене суйласа илнĕ. Программăна радиоитлекенсене интереслентермеле тунă, унта пур йышши пултарулăха та курма пулат. Кунпа пĕрлех, программă хăйĕн ăш-чикĕ тĕлĕшĕнчен те пуйан, çĕнĕ йурăсем нумай. Программăри йапаласене итленĕ хыççăн, пирĕн çĕршыври ĕççыннисен куљтурлă та савăнăçлă пурнăçĕ туллин тапса тăни, совет халăхĕ хамăрăн тăван çĕршыва, йуратнă çулпуç Сталин йулташа чĕререн савса тăни—йантравлăн та уççăн, савăнăçлăн илтĕнсе тăрат.

Фестивале лайăх хатĕрленнĕшĕн, выступленисене аван иртернĕшĕн республикăри Жÿри Çĕмĕрле районĕнчи фестиваљ комиççи председателне Матвейĕв йулташа тата уйрăм коллективсемпе исполнителсене тав турĕ.

Фестивалĕн 5-мĕш кунĕнчех тата Турханпа Шăнкăртам районĕсем те хăйсен пултарулăхне кăтартрĕç.

Выступленисем пĕр майлă, вăтам пулчĕç. Шăнкăртам районĕн программи Турхан районнинчен интереслĕрах пулчĕ. Белоостраври колхоз хорĕ, Сурминскăри колхоз хорĕ аван йурларĕç, шавлă оркестр „Еппипе" тутарла кĕвве ăраснах лайăх выљарĕ.

Турхан районĕнчи фестиваљ комиççийĕ вырăнти художĕствăлă пултарулăха тивĕçлĕ таран палăртман. Мĕн пурĕ те Тайбинский йертсе пыракан хорсем çеç пулчĕç, ытти хорсем çук-ши мĕн вара Турхан районĕнче?.. „Буденнăй" колхоз хорĕ, Аслă Арапуç колхоз хорĕ тата Арапуçĕнчи шкул хорĕ йурласса начар мар йурларĕç, анчах район выступленинче икĕ йал пултарулăхĕ çеç пулни кÿрентерет. Тайбинский, чăнах та, республикăри лайăх дирижорсенчен пĕри шутланма тивĕçлĕ, вăл йертсе пыракан хорсен репертуарĕнче çĕнĕ йурăсем нумай. Уйрăм йурлакансенчен Çăкалăхри пуçламĕш шкулра вĕренекен Райă Макаровă (11 çулхи хĕрача) радиофестивале чыслаcа хăй çырнă такмаксемпе аван йурласа пачĕ, Турхан Ангелинă та начар мар йурларĕ. Çавăнпа, паллах ĕнтĕ, тăрăшнă пулсан Турхан р-нĕ лайăхрах выступленисем пама пултаратчĕ.

Йакку Араслан.

Радиофестивалĕн 6-мĕш кунĕ

Радиофестивалĕн 6-мĕш кунĕ Патăрйел районĕн выступленийĕпе пуçланчĕ. Анчах вăл фестивале йăватă хор коллективĕпе икĕ оркестр çеç тăратнă. Вĕсем те, номĕрсене иртерни йенчен илсен, пит мухтамалах мар. Туçари вăтам шкул хорĕ, „Ленин çулĕ" колхоз хорĕ тата ыттисем те кăшкăрсарах йурлаççĕ, сасăсене вырăнлă лартса, йĕркелĕн килĕштерсе пымаççĕ.

Хĕлĕхлĕ оркестрсем (Тăрăнпа Патăрйел шкулĕсен оркестрĕсем) начар хатĕрленнĕ. Вĕсен репертуарĕнче çĕнĕ йурăсем пĕрре те çук. Хăшпĕр йурăсене арпаштарчĕç: „Златые горы" вырăнне „Поздняя осень" йурăна выљарĕç. Уйрăм йурлакансем пирки çакна каламала: Труçиновăпа Парфенăва йултăшсен сассисем лайăх, анчах йурăсен кĕввисене тĕрĕс вĕренменнипе пăсса йурларĕç.

Патăрйел районĕ хыççăн Канаш районĕ тухрĕ. Сиккассинчи „Шмидт" колхозăн Мурзуков йертсе пыракан хорĕ йĕркелĕ хорсен шутне кĕме тивĕçлĕ. Вĕсем Патăрйел районĕн выступленийĕ хыççăн уйрăмăнах лайăх илтĕнчĕç. Йатарласа çырнă „Колхоз хĕрсен йурринe" (автăрĕ Зайцĕвă) хĕрсен ансамбăлĕ лайăх йурларĕ.

Йĕпреç районĕ хăйĕн пултарулăхне тулли кăтартаймарĕ, „Социалисăм" колхоз хорĕ чылай йурăсене килĕшÿлĕ йурларĕ, анчах хăшпĕр йурăсене пăсса йурларĕ.

Н. Иљпек.

Чукунçул строительствинчи стахановла вунăкунлăх

Пилĕкĕмĕш кун

Стахановла вунăкунлăх пуçлансанах уйрăм участкăсем кулленхи ĕç нормине сахал процентпа тултарса пынă. Ку ĕçе районсенчи руководительсем те начар хутшăннă. Уйрăмăнах Йелчĕк, Шăхасан, Тăвай районĕсем чукун çул тăвасси çинчен аса та илмен.

Стахановла вунăкунлăх пуçланнăранпа чылай ÿсĕмсем туни курăнат. Шыв пăрки тăвакансен бригади (бригадирĕ Коçулин)—154 процент, Ваçилйĕв плотник бригади нормăна—178 процент, 7-мĕш участкăри Широхудинăв бригади 155 процент, Коровин каменщик бригади—146 процент тултарнă.

6-мĕш участкăри кăмака тăвакан Д. Трубин кашни кулленех хăйĕн ĕç тухăçлăхне ÿстерсе пырат. Вăл пиллĕкĕмĕш кунта ĕç нормине 191 процент тултарнă.

Уйрăм участкăсем тăрăх илсен, пĕр кунхи плана çакăн пек тултарнă: 1-мĕш участкă (начаљникĕ Лобуц)—33,2 процент, 2-мĕш участкă (начаљникĕ Петров)—26,6 процент, 3-мĕш участкă (начаљникĕ Дашков)—21,9 процент, 4-ш участкă (начаљникĕ Баканăв)—19,7 процент, 5-мĕш участкă (начаљникĕ Захаренко)—53,0 процент, 6-мĕш участкă (начаљникĕ Розанăв)—23 процент, 8-мĕш участкă (началникĕ Бубчикăв)—20,1 процент, 9-мĕш участкă (начаљникĕ Дорогов)—50 процент. Пĕтĕмпе пĕр кун хушшинче 60.521 кубла метр çĕр чавса купаламала, вăл плана 28,6 процент çеç тултарса пыраççĕ. Çапла вара чукун çул строительствин çулталăк планне 54 процент çеç тултарнă.

Малтанхи 1—2 кунсенче ломсемпе тимĕр кĕреçесем, вутă çителĕклĕ пулман. 4—5-мĕш кунсенче çунтармали йапаласем çитменнипе автомашинăсем ĕçлемесĕр тăнă. Кун çине строительствăри пуçлăхсем те сахал çавăрăнса пăхнă.

Улттăмĕш кун

Пиллĕкĕмĕш участкă (начаљникĕ Захаренко) малтанхи кунсенче чи кайри участкăсенчен пĕрийĕ пулнă пулсан, ĕçе лайăх организацилени пе тата строительствăра ĕçлекенсене ĕçре пулăшса пынипе 6-мĕш кунта хăйĕн кулленхи ĕç нормине 97,5 процент тултарнă. Çавнашкалах 6-мĕш участкăпа (начаљникĕ Андрейĕв) 2-мĕш участкă (начаљникĕ Петров) та улттăмĕш кунта 36,7 процент тултарнă.

Уйрăм ĕçсенче ĕçлекенсем те хăйсен ĕçĕн тухăçлăхне кулленкунах ÿстерсе пыраççĕ. 6-мĕш участкăри шыв пăрки тăвакан бригадă (бригадир Коçулин) 6-мĕш кунта плана 252 процент тултарнă. Кунта Копыченко прораб ĕçе лайăх организациленĕ.

Çав хушăрах чăгма çук кайа йулса пыракан участкăсем те пур. 4-мĕш участкă (начаљникĕ Баканăв) плана 11,3 процент, Шупашкарти станцинче—15,2 процент, 8-мĕш утастка (начаљникĕ Бубчикăв)—6,4 процент çеç тултарнă.

Шупашкарти станцинче октябĕрĕн 6-мĕш кунĕнче пĕр çын та ĕçлемен.

Чукунçул строительствине çителĕклĕ ĕç вăйĕ парар

Халĕ епĕр Канашпа Шупашкар хушшинчи чукунçула хыватпăр. Çак çул республикă столицине районсемпе, çавăн пекех тата Сойузăн пур чукунçулĕсемпе те çыхăнтарат. Чукунçул хывни чăваш ĕçхалăхĕшĕн пысăк савăнăç пулса тăрат.

Чукунçула партипе правительствă кăтартăвĕ тăрăх вăхăтра туса пĕтересси пысăкран та пысăк тата ответлă ĕç. Халĕ чукунçула вăхăтра туса пĕтерес тĕлĕшпе стахановла вунăкунлăх пырат.

Елĕк районĕнчи чылай колхозсем ПСК(б)П Чăваш Обкомĕпе Чăваш АСС Республикĕн Тĕп ĕçтăвкомĕ колхозсем патне йанă çырăва сÿтсе-йавса хаљ пулса пыракан стахановла вунăкунлăха хастарлăн хутшăнаççĕ, чукунçул строительствинче тăрăшса ĕçлеççĕ.

Актай йалĕнчи „Комбайн" колхоз чукунçул строительствинче ĕçлеме колхозниксене бригадă туса йачĕ. Çак бригадă Хĕрлĕ Çар ретне кайнĕ Малинин йулташ йертсе пынипе ĕçре хастарлăн ĕçлет. Колхозăн план тăрăх 40 кубла метр тăпра чавса купаламала. Бригадă лайăх ĕçленипе кĕске вăхăтрах 65 кубла метр çĕр чавса купаларĕ.

Иунтапа йалсоветĕнчи Иакункă колхозĕ те чукунçула вăхăтра туса пĕтерес тĕлĕшпе тăрăшса ĕçлет. Ку колхозра 10 çынтан (вĕсене 2 лаша панă) бригадă организацилесе чукунçул тума кăларса йанă. Халĕ çак бригадă 200 кубла метр çĕр чавса турттарас вырăнне 220 кубла метр чавса турттарчĕ. Ĕçре 65 çулхи Иефимăв кулленхи нормăна 120—130 процент таран тултарса пырат.

Çавнашкалах „Партин XVI-мĕш сийесĕ", т. ыт. колхозсем чукунçул строительствинче лайăх хутшăнса ĕçлеççĕ. Чăваш Сорăм, Елĕкушкĕн, Йунтапа йалсоветĕнчи колхозсем планĕсене ытлашшипех тултарса çитерчĕç.

Анчах çав хушăрах чукунçул тăвас чи ответлă та хисеплĕ ĕçе районри хăшпĕр йалсоветсемпе колхозсен председателĕсем, кирлĕ пек хакламаççĕ. Строительствăна çителĕклĕ ĕç вăйĕ йамасăр чăрмантараççĕ.

Асакасси йалсоветĕнчи колхозсемпе йединоличниксем ку вăхăта çитсе те чукунçул тунă çĕре çынсем уйăрса паман. Йалсовет председателĕ Спиридонăв йулташ ку ĕç ман ĕç мар, тет пулас. Çавăнпа чукунçул тунă çĕре ĕç вăйĕ çителĕклĕ таран тăратас тĕлĕшпе ĕçлемест. Çавăн пекех Урмайри „Çуттăла" колхоз председателĕ Нилов хăтланат.

Ф. Филиппăв.

Хаçатсене пăхса тухни

Бољшевикла хаçата таса алăпа тумала

Турхан районĕнчи „Коммунар" хаçат йулашки номĕрсенче çак хаçатăн редакторĕ пулнă П. Жданкин ĕçĕсем çинчен çырма пуçларĕ. Вăл материалсем Жданкинăн тăшманла ĕçĕсем çинчен калаççĕ.

Хаçат çакăн пек туни вăл тĕрĕс. Тăшманла етемсемпе çыхăнса кайнă Жданкин хаçатра тунă сăтăрла ĕççене пĕтĕмпех тăрă шыв çине кăларас пулат.

Жданкин тăшмансемпе çыхăннă, вĕсен киревсĕр ĕçĕсене витсе пынă, хаçатăн партилĕхне пĕтерме пур майсемпе те тăрăшнă. Çак киревсĕр ĕçе вăл районти хаçат редакцине тăшманла етемсене (Сакмарăв, Куçмина) илсе тунă.

Ыйту тухса тăрат: Жданкинăн партине хирĕçле ĕçĕсем ку таранччен парти райкомĕшĕн тата редакцинче ĕçлекенсемшĕн паллă пулни? Паллă пулнă. Çаксене фактсем лайăх çирĕплетсе параççĕ. Акă вĕсем. 1936 çулта Жданкин Сакмарăва афериста редакцине ĕçлеме илет, унăн авторитетне вĕрсе çĕклет. Вăлах троцкиссемпе çыхăннă Куçминăна редакцине ĕçлеме илет. „Чăваш Коммунĕ" хаçат редакцинчен хăваласа кăларса йанă Йефремăва хăй патне телеграммă парса чĕнет. 1936 çултах Митта Ваçлейне чаплăн кĕтсе илет, унăн националисла сăмахне „Коммунар" хаçатра пичетлесе кăларат, т. ыт. те.

Жданкин çак киревсĕр ĕççене тунă чухне парти райкомĕ тата редакцин ытти сотрудникĕсем (Поручиков т. ыт.) ăçта пулнă? Йе вĕсем Жданкин киревсĕр ĕççем тунине айакран çеç пăхса тăнă? Хаçатăн йулашки номĕрĕсенче çырнă фактсем çак ыйтусем тăрăх парти райкомне те, Жданкинпа пĕрле редакцинче ĕçленисене те айăпласа ответ параççĕ. 1936 çулта стена хаçат редакторĕсен уйăхлăх курсне Жданкин тепĕр тăшмана, Михайлăва, сĕтĕрсе пынă. Çак тăшман Михайлăв Жданкин куç умĕнчех фашисла бандита мухтанă. Çакăн çинчен йалкор Урмаков йулташ парти райкомне те, редакцине те çырса пĕлтернĕ. Анчах çак сигнал çине никам та çавăрăнса пăхман. Йулашкинчен тепĕр факт. Парти Тĕп Комитечĕн феварљпе мартри пленумĕн решенине сÿтсе-йавма пухăнна парти пухувĕнче те, актив пухувĕнче те „Коммунар" хаçатăн политикăла йанăшĕсем çинчен уççăн кăтартса панă пулнă. Çаксем çине райком çавăрăнса пăхман.

Тăшманла ĕçсем пирки ылхании çеç сахал, тăшмансене вĕçне çитиччен йĕрлесе тупса кăкласа ывăтас пулат. Райкомăн халех хаçат ĕçнĕ, тата редакцинче ĕçлекенсен ĕçĕсене тĕплĕн тĕрĕслесе тухмала. Жданкин тымарĕсем колхозсемпе бригадăсенчи стена хаçат редакторĕсемпе ĕççалкорсем хушшинче те пур. Парти руководстви çавсем патне çитмеле.

Ĕçкунĕсене хаљ те çырмаççĕ

Йалхуçалăх ертелĕн сталинла уставĕнче колхозниксем ĕçленĕ ĕçкунĕсене вăхăтра çырса парассине лайăх кăтартса панă. Ку ĕнтĕ пуриншĕн те саккун пулса тăрат. Анчах çакна Тăвай районĕнчи колхозсем чылайăшĕ пурнăçламаççĕ.

Вăрманхĕрринчи „Хĕрлĕ Сормава" колхозра ака, сÿре тунисене ку таранччен те колхозниксен ĕçкĕнекисем çине лартман.

Турикас Тушкилти „Хĕрлĕ Çар" колхозри 2-мĕш бригадăн бригадирĕ Л. Семйонăв чылай вăхăт хушши ĕçленĕ ĕçсен нарйачĕсене правленине тăратман. Халĕ тата Семйонăв колхозниксем ĕçленĕ çĕре тухса та курмаст.

Ал. Пикишкин.

ИСПАНИРИ ФРОНТСЕНЧЕ

Хĕвелтухăçри фронт

Хĕвелтухăçри (Арагони) фронтра „Голубые стрелы“ ятлă Итали дивизин чаçĕсем октябрĕн 2-мĕшпе 3-мĕшĕнче, виçĕ танк пулăшнипе, Суерă ялĕн районĕнче (Сарагоссă хулинчен çурçĕрелле) республика çарĕсем çине виçĕ хутчен атакăлана, анчах вăл атакăсене сирсе яна, фашиссен салтакĕсем нумай вилнĕ. Октябрĕн 5-мĕшĕнче правительство артиллерийĕ Теруэл хулин сывăхĕнче фашиссен сыхăну çулĕсем çине персе тăнă.

Çурçĕрти фронт

Çурçĕрти фронтăн хĕвелтухăç пайĕнче октябрĕн 5-мĕшĕнче республика çарĕсем Лабра ялĕнчен çурçĕрелле 408 текен çÿлĕ вырăна йышăннă, пĕр пулемет, винтовкăсемпе вăрçă снарйаженийĕсем нумай туртса илнĕ.

Ытти фронтсенче ăру-тăру улшăнман.

Лапра-çĕнрелĕ çапталăк персе çитнĕ пирки пур фронтсенче те вăрçă ĕçĕсем чылай чакнă.

(ТАСС).

Итали Испанине çĕнĕ çарсем йанă

РИМ, октябрĕн 4-мĕш (ТАСС). Журналиссем пичет министерствин представителĕнчен:—Бизсо полковник самолçочĕсен ескадрилйине Испанине кăларса йанă, вăл ескадрилйинче Муссолини ывăлĕ Бруно та пур, текен хыпар тĕрĕс-и?—тесе ыйтнă. Пичет министерствин представителĕ çав хыпар тĕрĕссипе тĕрĕс маррине калама пултарайман.

Германин çĕнĕ ескадрине Испанине йанă

БЕРЛИН, октябрĕн 5-мĕш. (ТАСС). Германин „Дейчланд“ броненосци пайан тепĕр хут Испанине кайат. Кунсăр пуçне, Испани шывĕсем çине Германи миноносцисен тăваттăмĕш флотилийĕ тухса кайат. Германин çĕнĕ ескадрине Испание йанин сăлтавне Германин Испани шывĕсем çинче тăракан çар карапĕсене улăштарма кирлĕ пулнинче, тесе ăнлантараççĕ.

Левaневски самолçотне шырама

Чухновски отрйачĕ Архангĕлçска вĕçсе пынă

Октябрĕн 6-мĕшĕнче ирхине Чухновски йулташăн тăвата „АНТ-6“ самолçотлă отрйачĕ Рудолçф утравĕ çине кайма Мускавран вĕçсе тухнă. Вăл отрйад унта Совет Союзĕн Геройĕн Шевелçов йулташăн експедицийĕпе пĕрлешсе, Левaневски йулташ самолçочĕн екипажне шырас ĕçе хутшăнат.

Отрйада ăсатнă чухне Фрунзе йачĕпе тăракан тĕп аеродромра Оборонă Халăх Комиссарĕн заместителĕ, Рабочисемпе Хресченсен Хĕрлĕ Çарĕн сывлăш-çар вăйĕсен начальникĕ иккĕмĕш рангри командарм Алкснис йулташ, çавнашкалах тата О. Й. Шмидт йулташ та Çурçĕр тинĕс çулĕн Тĕп Управленин ответлă работникĕсем те пулнă.

9 сехет те 40 минутра отрйад Архангĕлçска кайма вĕçсе хăпарнă.

6-сехетрен отрйад самолçочĕсем Архангĕлçск сывăхĕнчи аеродрома ăнăçлăн анса ларнă.

ТАСС корреспонденчĕ Чухновски лçотчик çапла пĕлтернĕ: самолçотсем Архангĕлçска кайнă чухне 600—700 метр çÿлĕшĕнче вĕçнĕ. Амдермăра (кунта отрйад Рудолçф утравĕ çине çитиччен анса ларма шутлат) октябрĕн 5-мĕшпе 6-мĕшĕнче шторм пулнă. Вăл халç лăпланат. Синоптиксем çирĕплетнĕ тăрăх, çентябрĕн 7-мĕшĕнче каçаларан пуçласа Амдермă районĕнчи çапталăк аванланмала.

(ТАСС).

„Çурçĕр полçусĕ“ станцинче

Октябрĕн 5-мĕшĕнче кăнтăрла Папанин çапла пĕлтернĕ: „Çурçĕр полçусĕ“ станци çурçĕр широтин 85 градусĕ те 19 минутинче тата хĕвелтухăç долготин 7 градусĕ те 0 минутинче тăрат.

13 сехет тĕлĕнче станци çинче çÿлĕ пĕлĕтсем пулнă. Таврaлăх 4—10 километр курăнат, çĕр çумĕпе йур вĕçтерет. Виçĕ баллă çил вĕрет. Термометр 21 градус сивĕ кăтартат.

* * *

РУДОЛçФ утравĕ çинче кăнтăрла кăштах йур çунă. Таврaлăх питĕ начар курăннă, çил—5 баллă, температурă—11 градус сивĕ.

(ТАСС).

К. Й. Ворошилăв йулташ Балти флочĕн кĕркуннехи тактикăлă вĕренÿвĕсенче

КРОНШТАДТ, октябрĕн 5-мĕш. (ТАСС корреспонденчĕ). Октябрĕн 5-мĕшĕнче хĕрлĕ йалавлă Балти флочĕн кĕркуннехи тактикăлă вĕренÿвĕсене Оборонă Халăх Комиссарĕ Совет Союзĕн маршалĕ К. Й. Ворошилăв йулташ пынă. Кронштадт рейдĕнче К. Й. Ворошилăв йулташ карапсене пăхса тухнă.

„Октябрьская революция“ линкор çинче Оборонă Халăх Комиссарĕн йалавне хăпартнă. Карап çине Оборонă Халăх Комиссарĕпе пĕрле Рабочисемпе Хресченсен Хĕрлĕ Çарĕн тинĕс вăйĕсен начальникĕ флотăн пĕрремĕш рангри флагманĕ Виктăрăв йулташ, иккĕмĕш рангри командарм Дыбенко йулташ, Балти флочĕн командуйущийĕ иккĕмĕш рангри флагман Исакăв йулташ, патшалăх хăрушсăрлăхĕн пĕрремĕш рангри комиссарĕ Заковски йулташ пынă.

Карапсене рейдран илнĕ. Кĕркуннехи тактикăлă вĕренÿсем пуçланнă.

Донбас кăмрăк промышлĕнноçĕнчи стахановцăсен тата ударниксен слçочĕ

СТАЛИНО, 6-10. (ТАСС). Пайан Сталинора Донбас кăмрăк промышлĕнноçĕнчи стахановцăсен тата ударниксен слçочĕ ĕçлеме пуçларĕ.

Слçот уçăлас умĕн Украинăри Коммуниссен (болçшевиксен) Партин Донецк обкомĕн секретарĕ Прамнек йулташ сăмах тухса каларĕ. Вăл аслă Сталинăн—социализăм çĕнтерĕвĕсен аслă организаторĕн, ĕçсыннисен тусĕн тата учителĕн йатне асăнсанах, слçота пухăннисем пурте ура çине тăрса Сталин йулташа хĕрÿллĕн саламлаççĕ.

Прамнек йулташ, слçот делегачĕсене Донбасра фашисăмăн троцкисла-бухаринла агенчĕсем сăтăрла усал ĕçсем туса, Пĕтĕм Союзăн Кочегаркине сахал мар сийен кÿни çинчен аса илтерчĕ те, командирсене тата шахтăсенчи стахановцăсене сăтăрлăх сийенĕсене хăвăртрах пĕтерме, Йăвăр промышлĕноçăс халăх комиссарĕн—Л. М. Каганович йулташăн сталинла кăтартăвĕсене пурнăçа кĕртессишĕн болçшевикла кĕрешме чĕнчĕ.

Стахановла ĕç метăчĕсен инструкторĕ—орденоносец Молостов йулташ слçотăн хисеплĕ председательне Сталин йулташа суйлама сĕнет. Унăн сĕнÿне слçот делегачĕсем тăвăллăн алă çупса йышăнаççĕ. Пурте тăвăллăн алă çупса, слçотăн хисеплĕ президиумне Сталин, Молотăв, Каганович, Ворошилăв, Калинин, Микойан, Чубар, Андрейĕв, Косиор, Жданăв, Йежов, Петровски, Димитров, Телçман, Хозе Диас йулташсене суйлаççĕ.

Слçот президиумне стахановла йухăма пуçарса йанă Алексей Стахановa, Никита Изотова, Мирон Дйуканăва, Молостова т. ыт. те—Донбасăн чаплă çыннисене суйлаççĕ.

Слçот ĕçне хутшăнма Йăвăр промышлĕнноç халăх комиссарĕ Л. М. Каганович йулташ пынă. Каганович йулташ президиумра курăнсан, слçот делегачĕсем пурте ăна нумайччен тата тăвăллăн саламлаççĕ,—залра: „Сывă пултăр сталинла Нарком!“—тесе саламланă сасăсем илтĕнсе тăраççĕ.

Слçотăн ирхи ларăвĕнче чи лайăх командирсем тата стахановцăсем хăйсен ĕç опычĕсем çинчен каласа пачĕç.

Слçот делегачĕсем шахтăсенче троцкисла-бухаринла сăтăрла ĕç сийенĕсене пĕтерес ĕç каçарма çук вăрахăн пулса пынине палăртрĕç тата горнаксен пĕтĕм масси партипе правительствă кăмрăк кăларакан Донбас умне лартнă задачăсене пурнăça кĕртме хатĕрри çинчен каласа пачĕç.

89.006 пин гектар пучахлă тырă вырса кĕртнĕ

32.715 пин гектар кĕрхи тырă акнă

Çĕршывра ăнса пулнă тырпула çентябрĕн 30-мĕшне совхозсемпе колхозсем 99 процент вырса кĕртнĕ. Тырра 89.006 пин гектар çинчен вырнă. Пĕлтĕр çак вăхăт тĕлне тырпула 85.041 пин гектар çинчен вырнă пулнă.

Вырса кĕртнĕ тырра колхозсем 72 процент çапса тирпейленĕ. Авăн çапас ĕçе, пуринчен ытла, хĕвелтухăç йенчи районсем вăраха тăсаççĕ.

Çентябрĕн 30-мĕш тĕлне Совет Союзĕнче кĕрхи кулçтурăсене 32.515 пин гектар акнă. Плана 88 процент тултарнă. Иртнĕ çулта çак срук тĕлне 34.178 пин гектар акнă пулнă.

Ака ĕçне хĕвелтухăçри тата çурçĕрти крайсемпе облаçсем, çавăн пекех хура тăпралă мар тăрăхри районсем те тăсса пыраççĕ.

Кĕрхи çĕртме тăвас ĕçĕн хăвăртлăхĕсем пачах çителĕклĕ мар. Çентябрĕн 30-мĕшне 15.824 пин гектар çинче çеç кĕрхи çĕртме тунă, пĕлтĕр çак числа тĕлне 23.785 пин гектар сухаланă пулнă. Плана Союз тăрăх 22 процент пурнăçа кĕртнĕ.

(ТАСС).

Ботвинникпа Левенфиш хушшинчи шахмăт матчĕ

Октябрĕн 5-мĕшĕнче, Мускавра, Политехнически музейăн пысăк аудиторинче ССР Союзĕнче малти вырăна йышăнас тĕлĕшпе М. Ботвинник гроссмейстер орденоносцăпа Совет Союзĕн шахмăт чемпионĕ Г. Левенфиш хушшинче шахмăт матчĕ пуçланнă.

Вăйă условийĕсем тăрăх, кам малтан ултă çĕнтерÿ тăват (вăйă никама пулмала мар тунине шута кĕртмеççĕ), çавă çĕнтерекенĕ пулат. Йенчен, иккĕшĕ те пилĕкшер хут выляса илсен, матч чарăнса ларат, вара ССР Союзĕн чемпионĕн йачĕ Левенфишрах йулат, çав вăхăтрах вăл ССР Союзĕн гроссмейстерĕн йатне илет.

Икĕ маçтăрĕ те питĕ тимлĕн, анчах çав тери сыхланса выляççĕ.

Хĕрĕхĕмĕш ход тунă хыççăн партине тепĕр вăхăта хăварнă, вăл Ботвинникшĕн лайăхрах пулнă (унăн ытлашши пешкă пур).

Партине октябрĕн 6-мĕшĕнче выляса пĕтермеле пулнă, анчах Левенфиш килсе тухнă ăру-тăру пирки шухăшласа пăхнă та, тепĕр хут выляма пуçламасăрах ăна ирĕклĕнех панă.

Иккĕмĕш партине октябрĕн 7-мĕшĕнче каçхине выляççĕ.

(ТАСС).

Виçĕ çулталăк норми

НИЖНЕДНЕПРОВСК, октябрĕн 5-мĕш (ТАСС). Карл Либкнехт йачĕпе тăракан савăтри чаплă стахановцă слесăр Иван Наркевич Октябер уйавĕ умĕнхи ăмăртура калама çук паха çитĕвÿ тунă. Тăхăр уйăх хушшинче вăл виçĕ çулталăк нормине тултарнă, Наркевич йулташ хăйĕн уйăхри нормине вăтамран 358 процент тултарса пынă. Çентябĕр нормине вăл 448 процент тултарнă. Наркевич йулташа пĕрремĕш класлă слесăр йатне пама ыйту хускатнă.

Колхоз председателне мĕнле суйланни тата мĕнле ĕçсем туни çинчен

ИШЛЕЙ. Т. Ваçилйĕв—„Çĕнĕ Марка“ колхоз председателĕ. Унта вăл 1936 çултанпа ĕçлет. Сăмах ун çинчен мар,—Ваçилйĕв колхоз председательне мĕнле майпа хĕсĕнсе кĕни тата халçхи вăхăтра мĕн-мĕн хăтланни çинчен пырат.

Т. Ваçилйĕв 1936 çул пуçламăшĕнче сын вĕлернĕшĕн тĕрмере ларса таврăнат. Ун чухне унăн тĕп шухăшĕ—мĕнле те пулсан колхоз производствин руководителĕнче ĕçлесе колхоза шал йенчен аркатма тытăнасси пулнă.

Вăл тĕрмерен ларса таврăннă вăхăтра, колхоз председателĕ çук пирки, унăн малтан пĕрле ĕçсе çисе пурăннă тусĕсем—кум-хăтисем хĕтĕртнипе ăна колхоз правлени председательне суйласси çинчен колхозниксен аслă пухăвĕ умне ыйту лартаççĕ. Колхозра тÿрĕ, вăйă хурса ĕçлекен çынсем вăл колхоза йухăнтарма тытăнассине тата унăн шанчăксăррине сиссе, ăна председателе суйласшăн мар тăраççĕ. Çакăн пирки те ăна суйлас текен колхозниксен хисепĕ сахал тухат.

Ку решенийе, сасă çитмен пирки, районти çĕрĕç пайĕ çирĕплетмест, тепĕр хут колхозниксен пухувĕнче сÿтсе-йавма йарат. Çавăн пек Çатра Маркари „Çĕнĕ Марка“ колхозра 3—4 хут пуху пулса иртет. Т. Ваçилйĕва колхоз председательне суйлама пур-пĕр сасă çитмест.

Халĕ ĕнте Ваçилйĕв тусĕсен—кум-хăтисен ăна председателе суйлама 75 сасăна çитерес ыйту тăрат. Мĕншĕн тесен, районти çĕрĕç пайĕнчен Ваçилйĕва колхоз председательне суйлас текенсен хисепне 75 сасăна çитерме ыйтнă. Вара райçĕрĕç пайĕнчи йулташсен шучĕпе, йалхуçалăх уставĕпе килĕшÿлĕ пулат иккен!

Кум-хăтасем татах тепĕр хут колхозниксен пухуне пухса, унта Ваçилйĕва колхоз председательне суйлас текенсен списăкне туса, вĕсене вăл хут çине алă пустараççĕ. Сасă сахал. Капла Ваçилйĕв колхоз председательне каллех суйлама пултараймаст. Кум-хăтасем хăйсемех сасă хисепне çитерес тесе, колхозниксем алă пусмă пек туса, вăл списка райçĕрĕç пайне тăратаççĕ. Çапла вара, райçĕрĕç пайĕнчи сисĕмсĕр çынсене пула çын вĕлерекен Т. Ваçилйĕв колхоз председателĕ пулса тăрат.

Т. Ваçилйĕв колхоз председателĕнче „ĕçлеме“ тытăнат. Хăйне тавра çынсем йавăçтарма, вĕсемпе пĕрле колхоз пурлăхне саратма пуçлат. Кăçал çуркунне Кивçурт Маркари Степан Димитрийĕв колхоз пĕвинчен вăрттăн пулă тытса Ваçилйĕв патне пырса пама пуçлат. Ушăн ăна Ваçилйĕв кĕреçе тырри парса тăрат.

Трактăриссем ирхи çĕртмене килсен, трактăрсем патĕнче Ваçилйĕв хăй хурал тăма йулса, вĕсене йала кĕртсе йарат. Ку вăхăтра Ваçилйĕв 2 витре красин вăрласа йулат. Вăл колхоз председателĕнче ĕçлеме пуçланăранпа ун патĕнчен пыллă сăра, ерех таталма пĕлмест.

Арманта ревизи пынă чухне унти тырра пĕтĕмпех шута илмесĕр хăварнă хыççăн, ăна сутнă укçапа колхоз правлени членĕсемпе ревизи комиçси членĕсен А. Илйин патĕнче вăйлă ĕçкĕ пулса иртет.

Т. Ваçилйĕв колхоз счетовочĕпе, Быкăвпа, хăйматлăхлă. Кăçал хăйар сутнă укçана пĕтĕмпех прихода кĕртсе цыман пирки, йаланах вăйлă ĕçкĕсем пулса пычĕç. Колхоз счетовочĕ те судпа айапланнăскер. Ревизи комиçси председателĕ Гаврил Степанăв та ку çынсемпĕ питех йут мар. Çакна пула колхозри çитменлĕхсене, сăтăрла ĕçсене витĕнтерсе, пытарса пыраççĕ.

Колхоз хуçалăхпа политикăла кампанисенче кайа йулса пырат. Кĕрхи çĕртме тумасăр партипе правительствăн решенийĕсене хирĕçлесе пычĕç. Октябрĕн 1-мĕшĕнче, каçхине, районтан килçĕ Йакăвлĕв йулташ колхозниксемпе йединоличниксен пĕрлешÿлĕ пухуне туса, унта „ССР Союзĕн Аслă Советне суйламалли Положенине“ сÿтсе-йавма тата чукун çул строительстви çинчен каласма тăчĕ. Ку кун Ваçилйĕв ури çине тăрайми ÿсĕр выртнă. Колхоз счетовочĕ Быкăв, йури пухува салатса йарас шухăшпа, кум-хăтасемпе пĕрле ĕçсе урам тăрăх йурласа çÿреме пуçлат.

Ку колхоза пур-сÿрген тасатавчĕ. Кунта халăх тăшманĕ ĕçлет.

Ив. Моççейĕв.

ФУТБОЛ

Футбол вăййипе хулари малти вырăна тухассишĕн

Октябрĕн 5-мĕшĕнче „Темп“ общчĕствин стадионĕнче Футбол вăййипе хулари малти вырăна тухас тĕлĕшпе кĕркуннехи ăмăрту пуçланчĕ. Вăйă икĕ группă тăрăх пырат. „А“ группăра „Темп“, „Спартак“, „Буревестник“ тата пединститут командисем выляççĕ. Пĕтĕм вăйă олимпи системипе пырат.

Ăмăртун малтанхи кунĕнче „Темп“ тата „Спартак“ общчĕствин пĕрремĕш командисем вылярĕç. Вăйă 5:0 „Темп“ общчĕствин иккĕмĕш команди çĕнтерипе пĕтнĕ.

Октябрĕн 6-мĕшĕнче „Темп“ общчĕствин пĕрремĕш команди „Буревестник“ команди „Спартак“ общчĕствин I-мĕш командипе пединститут команди вылярĕç. Вăйăра темпăвцăсен пĕрремĕш команди „Буревестник“ командине 7:0 шутпа, спартакăвцăсем пединститут командине 9:0 шутпа çĕнтерчĕç.

Çак кунах „Б“ группăри йалхуçалăх институчĕпе педрабфак командисем выляреç. Вăйă 1:1 шутпа пĕтнĕ. Анчах та педрабфак команди вылякансене урăх командăсенчен илсе вылйаттарнă пирки вăйă 1:0 шутпа йалхуçалăх институчĕн команди çĕнтерипе пĕтнĕ тесе шутланă.

Мускав—Шупашкар

Пайан „Темп“ общчĕствин стадионĕнче Мускаври „Торпедо“ общчĕствин футбол команди Шупашкар хулинчи „Темп“ общчĕствин пĕрремĕш командипе тĕл пулса вылят. Мускав команди — спорт маçтăрĕсен команди. „Темп“ команди ку таранчен Чăваш республикинчи пĕрремĕш вырăнта тăрат. Вăлах Хусанти „Спартак“ командине 4:2 шутпа, Горйки „Строител“ командине 1:0 шутпа çĕнтернĕ. Пайанхи вăйă питĕ хĕрÿлĕ пулмала. Кунашкал спорт маçтăрĕсен команди килни пирĕн футболиссемшĕн вĕренмели шкул пулат.

Мĕне „шута илсе“ пăснă-ши?

„ССР Союз историйĕн кĕске курсĕ“ *) Совет çĕршывĕнчи шкулсемшĕн пит те кирлĕ, пит те хаклă кĕнеке пулса тăни çинчен пурте ĕнтĕ пĕлеççĕ. Ăна „Çамрăк колхозник“ хаçат та „пĕлет“ темеле. Вăл çак кĕнекен пĕрремĕш главине вырăсларан чăвашла куçарса кăларма та ĕлкĕрчĕ. Вăл „çак учебник тăрăх темиçе мĕлйун çамрăксемпе ачасем кăна мар, мĕлйун рабочисемпе хресченсем, пинĕ пинĕпе парти активисĕсем, комсомолĕссем, пропагандиссем, агитатăрсем вĕренсе хĕçпăшалланĕç. Çавна шута илсе епĕр ăна хаçатра пичетлесе кăларатпăр“, тет. Аван шухăш, шута илни те тĕрĕс! Анчах „Çамрăк колхозник“ куçарни пĕрре те куçарнă йапала пек мар: истори курсĕн текстне калама çук пăсса пĕтернĕ, çавăнпа та, „Çамрăк колхозник“ хăй „шута илнине“ хирĕç пырат тесен те, йăнăш пулас çук. Пĕр глава кăна, анчах йăнăшсем, сиктерсе хăварнисем, хушса каланисем пĕр „главаран“ та иртме пултараççĕ.

Кĕнекен йатне те пулин тĕрĕс куçарман. Вырăсла: „Краткий курс истории СССР“. „Çамрăк колхозникре: „ССР Союзĕн кĕске курслă историйĕ“. Ку ĕнтĕ „ССР Союз историйĕн кĕске курсĕ“ вырăнне пулса тăнă йапала.

„По природным богатствам наша страна самая богатая в мире“. (3 стр.) тенине „Çутçанталăк пуйанлăхĕсемпе пирĕн çĕршыв çав тери пуйан“, тесе куçарнă. Кунта „в мире“ тенине сиктерсе хăварнă. „Çамрăк колхознике“ пирĕн çĕршыв тĕнчере чи пуйан çĕршыв пулни килĕшмест пулмала. Анчах ку йапала мĕне „шута илнипе“ пулнă-ши?

„В 11 союзных советских республиках живет до 50 разных народов...“ тенине „11 союзлă республикăсенче 50 вак халăх... пурăнат“, тесе куçарнă. Кунта тата темшĕн, теме „шута илсе“ ĕнтĕ „советских“ сăмаха пăрахса хăварнă тата „разных“ тенине „вак“, тесе куçарнă.

Çавăн пекех тата „Все они объединились в один братский союз...“ предложенире „в один“ тенинĕ сухатса хăварнă. Анчах „Çамрăк колхозникшĕн“ ку та сахал пулнă. Вăл „Это все называется историей“ тенĕ вырăна йалтах пăрахса хăварнă.

Тата тепĕр тĕлĕнмеле йапала. Кĕнекери текстра: „Около полумиллиона лет...“ тенĕ; „Çамрăк колхозникри“ текстра: „çĕрмĕлйун (?!) çула йахăн...“ пулса тухнă.

„У одних членов рода имущества стало больше, у других меньше“ (7 стр.). Куçарнă: „Пĕр йышши ăратсен (?) пурлăхĕсем нумайрах пула пуçланă, теприсен сахалрах“. Паллах, „У одних членов рода“ тени вырăнне „пĕр йышши ăратсен“ тени йăнăш.

Малала тата: „Более 2500 лет назад на северные берега Черного моря приплыли на кораблях переселенцы из Греции“ (9 стр.) тенине „2500 çул кайала Хура тинĕсĕн çурçĕр çыранĕсем çине Грекрен кочевниксем (?!) карапсемпе ишсе тухса вырнаçнă“ тенĕ. Мĕнле майпа кунта „кочевниксем“ сăмах килсе ларнă? Чăн та капла куçармашкăн „кочевниксем“ пулас пулат. Сăмах май калар, „более 2500 лет назад...“, „Около 2500 лет назад...“, „2000 лет назад...“ тенисенче ни „более“, ни „около“ сăмахсем çук, — „кочевниксен“ хастар аллисем вĕсене йалтах саваласа тăкнă.

Тата уйрăм сăмахсене куçарнисем пирки пĕртак калар. Диковенный — тискертерех (диковатый); землянка — çĕршăтăкĕ; война — çапăçу; воин — çапăçакан; воинственный — çапăçакан; соплеменник — ĕçсынни; соседний — сывăхри; лен — сÿс т. ыт. те. Ку сăмахсене пĕрне те тĕрĕс куçарман. Сăмахсене тĕрĕс куçарман пирки шухăшсем те пăсăлса кайнă.

Примерсем татах та кÿме пулат. Анчах çак примерсем те „Çамрăк колхозник“ хăйĕн çак ĕçне начар, нимле ответлăха туймасăр туни çинчен лайăхах каласа параççĕ. Йулашкинчен татах та ыйтас килет: „Çамрăк колхозник“ (тĕрĕссипе каласан, унăн редакторĕ пулăскер П. В. Йашевский) çак паллă учебнике мĕне „шута илсе“ çав тери пăсма хăтланнă-ши?

*) „Краткий курс истории СССР“ под ред. проф. А. В. Шестакова.

Китайри вăрçă

Китайри 8-мĕш çар ăнăçлăн çапăçат

Шанхай фронтĕнче Чапей (Шанхайăн çурçĕрти кварталĕ) тата Лодйанçпе Лçуцзйахан (Шанхайран çурçĕрелле) йалĕсен районĕнче октябрĕн 4-мĕшпе 5-мĕшĕнче хайар çапăçусем пулса иртнĕ. Китай çарĕнче те, Йапони çарĕнче те вилекенсем нумай. Йапони чаçĕсен вăйлă атакисене Китай çарĕсем ăнăçлăн çапса аркатаççĕ.

Октябрĕн 4-мĕшĕнче Чапей районĕ çине сывлăшран бомбăсем пăрахса калама çук хытă тапăннă. Пысăках мар уйрăм участкăсем çине пĕр харăсах 2—3 самолçотран бомбăсем пăрахнă.

Шанçси провинцин çурçĕр пайĕнче çапăçакан Китайри 8-мĕш çар чаçĕсем Чжу Де йертсе пынипе Йапони интервенчĕсен çарĕсене хытă тăпăлтараççĕ. Октябрĕн 1-мĕшĕнче Китай çарĕсем Цанçмыньгоу хулинчен çурçĕр-хĕвеланăç йенче Шечжоу (йе Шоусаçн) йатлă уйес хулине йапонцăсенчен кайала туртса илнĕ. Китайцăсем Йапонин 200 салтакне тыткăна çавăрса илнĕ. Октябрĕн 2-мĕшĕнче Китай çарĕсем 20 километр малала кайнă та, Цинпин хулине йышăннă, 200 салтака тыткăна илнĕ, çавăн пекех питĕ нумай вăрçă снарйаженийĕсем—вăл шутран 8 танк, 15 бронемашинă, 5 грузовик, 2 пулемет тата 30 винтовкă туртса илнĕ.

8-мĕш çар виçĕ уйрăм ушкăн çине уйăрăлса çапăçат тата Йапони çарĕсен тылĕнче партизанла тактикăпа усă курат.

Йапонирен пĕлтернĕ тăрăх, Йапони çарĕсем Таньцзин—Пукоу чукун çулĕ тăрăх Шандуçн провинцине шалала кĕрсе кайаççĕ, октябрĕн 5-мĕшĕнче Гучену хули патне çитнĕ.

Çентябрĕн 28-мĕшĕнче Йапони çарĕсем Шуосаçн хулинчи (Шанçси провинцин çурçĕрти пайĕ) мирлĕ халăха нимĕн хĕрхенмесĕр асаплантарнă. Бомбăсем пăрахса вăйлăн çĕмĕрнĕ хыççăн икĕ йенчен хулана тапăнса кĕнĕ те, йапонцăсем китайцăсене пĕрерĕн-пĕрерĕн хĕнесе тухнă. Мирлĕ пурăнакан виçĕ пин çынна тискер кайăксем пек вĕлерсе пĕтернĕ.

(ТАСС).

Китай партизанĕсем Йапони çарĕсен тылĕнче

Англи пичечĕ пĕлтернĕ тăрăх, Бейпин сывăхĕнчи сăртлă районсенче Йапони захватчикĕсене хирĕç Китайри партизан отрйачĕсем активлăн кĕрешеççĕ. Йапони командованин партизансене хирĕç ирĕксĕрех вунă пин салтак танксемпе тата артиллерипе пĕрле йамала пулнă.

(ТАСС).

Клевĕр çапса пĕтерчĕç

ЕЛĔК. Урмай йалĕнчи „Çуттала“ колхоз клевĕр çапса пĕтерчĕ. Ку ĕçре бригадирсем Романăвпа Гаврилăв тăрăшса ĕçлерĕç.

Ф. Филиппăв.

Начар ĕçлекен йалпо

Кивĕ Шелттем йалповĕ (Канаш р.) начар ĕçлеме тытăнчĕ. Таварçаврăнăш планне кашни кварталтах 70—80 процент кăна тултарса пырат. Пай укçи пухасси, çĕнĕрен членă илесси асра та çук. Йалпора ĕçлекенсем хушшинче суйлав Положенине вĕренме тытăнман.

Казаковăн ĕçсе çÿрес йали йалпора ĕçлекенсене сăтăр туma пулăшат.

Ив. Радикăв.

ХРОНИКА

Чăваш АССР Ĕçтăвакан Тĕп Комитет президиумĕ Николай Иванăвич Серебренникăв йулташа Чăваш АССР Çĕрĕç халăх комиссарĕн заместителĕ тунă.

* * *

Чăваш АССР Ĕçтăвакан Тĕп Комитет президиумĕ Антоний Ваçилйĕвич Хрусталçов йулташа, вăл урăх ĕçе куçнă пирки, Чăваш АССР Çутĕç халăх комиссарĕн заместителĕ ĕçĕсенчен хăтармала тунă.

Пĕлтерни

ПСК(б)П Тĕпкомĕ çумĕнчи партилĕ контролç комиççин Чăваш АССР-чи Уполномоченнăйĕ çумĕнчи партколлегин 1937 çулти октябрĕн 10-мĕшĕнче пулмалли заседанийĕ çав асăннă числара пулмаст. Заседани хăш кун пуласси çинчен уйрăммăн пĕлтереççĕ.

Парти райкомĕсенчен чĕннĕ йулташсене („Чăваш Коммунĕ“ тата „Красная Чувашия“ хаçатсен 1937 çулти çентябрĕн 27-мĕшĕнче тухнă номĕрĕсене пăхăр) çакăн çинчен пĕлтерме ыйтатпăр. Партколлеги.

Ответлă редактăр заместителĕ И. П. ПАВЛОВ—ПИНЕР.

Вăрнар районĕнчи Çаркăлă вăрманĕнчен Çентябрĕн 26-мĕшĕнче

икĕ ĕне çухалнă

Пĕри — Красногорбат йăхĕ, 3 пăру тунăскер, тепри — вырăнти йăх, 8 пăру тунăскер, тĕçĕ — хĕрлĕ-ула. Пĕлекенсен Çаркăлă вăрман пунктне пĕлтермеле.

Реестровая государственная публикация

НАИМЕНОВАНИЕ: Ст. Урмарская промартель „Универсал“

Расчетный счет: 105—249 в Урмарском отд. Госбанка

Предмет деятельности	Орган, в ведении которого находится	Местонахождение правления	Кому сбывает продукцию	Финорган, производивший регистрацию
Канатно-веревочные изделия и ремонт обуви	Чувашкультпромсоюз	д. Ст. Урмары, Урмарского района, ЧАССР.	Рыночным потребителям.	Урмарский Райфо

Председ. правления И. Якимов.

„Чăваш Коммунĕ“ сырăнса илмелли хаксем; 12 уйăха—30 т., 6 уйăха—15 т., 3 уйăха—7 т. 50 пус, 1 уйăха—2 т. 50 пус. Алçырăвĕсене кайала памаççĕ.

Уполномоченный Чувашглавлита № 732. Гор. Чебоксары, Типография № 1 Чувашгиз. Заказ № 1923. Тираж 11564.ф. 58—92 см. 1—1 п. л.